4172
41-271

Б. В. ФЕДОРОВ

# Куликово хирӗнчи ҫапӑҫу

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

4172

Б. В. ФЕДОРОВ

# КУЛИКОВО ХИРĔНЧИ ÇАПĂÇУ

*Н. Колюшкин куçарнă*

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941



Куликово хирӗнчи ҫапӑҫу. 1380 ҫ.

*Н. Некрасов худ. картинӗнчен.*



## Тутарсемпе малтанхи хут тытăçни

1223 çулти çуркунне вырăс князĕсем пачах кĕтмен çĕртен Дон лешъенчи çеçенхирсенче куçса çӳрекен кипчаксенчен (половецсенчен) вырăс çĕрĕсен чиккисем патне темле халиччен илтмен тăшмансен шутсăр нумай çарĕ çывхарса килни çинчен илнĕ хыпарсем пирки питĕ пăшăрханса ӳкнĕ.

Çеçенхирсенчи куçсаçӳрен халăхсене хирĕç кĕрешесси, хăйсен чиккисене вĕсен тапăнăвĕнчен сыхласа тăрасси— вырăс халăхĕсемшĕн вăл вăхăтра яланхи, кулленхи ĕç пулнă. Куçсаçӳрен чăрсăр, паттăр халăха—печенегсене хирĕç кĕрешнине вĕсен аслашшĕсем те лайăх астунă, кипчаксене (половецсене) хирĕç кĕрешесси вара мĕн юлашки кунсемччен пулса пынă.

Апла пулин те çак хыпара илтсен вырăс князĕсем, вĕ-

сем кăна мар, вырăс çĕрĕсенчи пĕтĕм халăх, питех те пăшăрханса ӳкнĕ. Нимрен ытла çывхарса килекен тăшман ку таранччен пачах паллă пулманни сехĕрлентернĕ. Тăшман пирки сарăлакан хыпар тĕлĕнтернĕ те, хăратнă та. Кăпăкланнă лашасем çинче пĕрин хыççăн тепри килсе тăракан кипчак хыпарçисем: тăшман шутсăр пысăк çарпа килет, талкишпе йăтăнса пырса вăл çул çинче мĕн тĕл пулнине пурне те пĕтерет, никама та каçару памасть, тесе пĕлтернĕ. Паллă мар çарсем тутарсем пулнă.

Часах тата та кичемрех хыпарсем килме пуçланă: тутарсем кипчаксен чи вăйлă ханне Юрий Кончаковича пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă, аркатса тăкнă кипчаксем çăлăнăç шыраса вырăс чиккисем патне тарнă. Çакăн хыççăн хан Кутан (Котян), Мстислав Галицкий князĕн хунĕшĕ, вырăс князĕсенчен пулăшу ыйтнă. Вăл вĕсене темĕн тĕрлĕ пуян парнесем—лашасем, тĕвесем, буйволсем тата тыткăнра тăракан çынсем парса, тутар çарпуçĕсен киревсĕрлĕхĕ çинчен асăрхаттарнă тата тутарсене пĕрлешнĕ вăйпа отпор пама кирли çинчен çине тăрса ӳкĕтленĕ.

„Эсир пире пулăшу памасан,—тенĕ вăл,—пире паян вĕлерсе пĕтереççĕ, ыран—сире!"

Киевра пухнă канашлура вырăс князĕсем кипчаксене пулăшма килĕшсе пит те тĕрĕс решени йышăннă: тăшмана хирĕç, вăл тапăнасса кĕтмесĕрех, тухмалла тенĕ вĕсем.

Вырăс князĕсен похочĕ çинчен илтсен, тутар çарпуçĕсем, вĕсене пур майсемпе те кипчаксене пулăшу партармалла мар тума тăрăшнă.

Вĕсем икĕ хутчен юриех посолсем янă, посолсен задачи—вырăссен сыхăлăхне мăкатасси, хăйсене вĕсен тусĕсем пулнă пек кăтартса, улталаса, кипчаксенчен уйăрасси пулнă.

Вырăс князĕсем çак ӳкĕтсене парăнман, вара пуçланнă поход малалла пынă. Вырăссемпе половецсен пĕрлешнĕ полкисем пысăк вăй пулса тăнă. Тутарсен хуралта тăракан постисемпе пулнă пирвайхи тытăçусем тутарсем по-

ражени курнипе пĕтнĕ. Çак пысăках мар отрядсене çămăллăнах çĕнтерсе пырса, союзлă полксем Калка шывĕ патне çитнĕ, унта вара тутарсен тĕп вăйĕсемпе тĕл пулнă.

Çакăнта, Калка шывĕ патĕнче, июнĕн 16-мĕшĕнче татăклă çапăçу пулса иртнĕ.

Хаяр, нумая тăсăлнă çапăçу вырăс çарĕсемшĕн халиччен пулман поражени курнипе пĕтнĕ. Поражени тӳснин тĕп сăлтавĕ вырăс князĕсем хушшинче пĕрлĕх çуккинче, вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнмасăр уйрăмăн çапăçнинче, пĕтĕмĕшлĕ руководство çуккинче, вĕсем пĕрмаях пĕр-пĕринпе çапăçса тата тавлашса пурăннинче пулнă.

Нумай князсемшĕн çапăçу кĕтмен çĕртен пулнă. Мстислав Галицкий, тутарсем çине хăйĕн тата кипчаксен полкисемпе тапăннăскер, хăйĕн мухтавне никама та парас мар тесе, хăйĕн ĕçĕсем çинчен никама та пĕлтермен.

Вырăссен хăшпĕр полкисенче çынсем хĕçпăшалсăрах пулнă, вĕсем мирлĕн каннă. Тутарсенчен таракан кипчаксем вăл полксене таптаса тăкнă. Юнлă çапăçу мĕнпе пĕтесси паллă пулнă. Уйрăм дружинăсем, отрядсемпе полксем тутарсене хирĕç геройла çапăçнă пулин те, вырăс çарĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

Авалхи летописçсем çав çапăçу çинчен каласа панă чухне тăшманăн тискерлĕхĕпе хаярлăхĕ çинчен хуйхăлăн тата тарăхса каласçĕ. Улталаса тыткăна илнĕ вырăс князĕсене тутар çар начальникĕсем асаплантарса вĕлернĕ: вĕсене çыхса хăмасем айне хунă та çав хăмасем çине апат çиме хăпарса ларнă.

Вырăс çĕрĕ тăрăх хăрушă хыпар вĕççе савăрăннă. Пурте хăраса ӳкнĕ. Çĕмĕрсе тăкнă вырăс дружинисене хăваласа, тутарсем Киев княжестви патне çывхарса пынă. Хуласемпе ялсенчи çынсем, пулса иртнĕ ĕçсенчен хăраса ӳкнĕскерсем, вĕсене парăннă пек пулса йышăнса илнĕ, анчах та тутарсем никама та каçару паман. Вырăс çĕрĕ пĕтсе ларнăнах туйăннă. Анчах та тутарсем сасартăк каялла çавăрăннă та, темиçе çуллăха çухалнă.

## Камсем вĕсем тутарсем, ăçтан тата мĕнле килсе тухнă вĕсем вырăс çĕрĕ çине?

Халиччен пĕлмен хаяр тăшман кĕтмен-çĕртен килсе тухни, вырăссен пĕрлешнĕ полкисем хуйхăллă пĕтни, тата, юлашкинчен, килнĕ тăшман сасартăк çухални—вырăс çыннисен ăстăнне тарăнăн хускатнă. Çак событи çинчен летописец айванла, мĕн пулнине пĕлмесĕр çырса хăварнă калавĕ пурте хăраса ӳкнине, çухалса кайнине кăтартса парать: „Вĕсене хăшĕсем тутарсем теççĕ, теприсем—таурменсем тесе калаççĕ, ыттисем—печенегсем теççĕ... Пĕр турă пĕлет, камсем вĕсем тата ăçтан килнĕ“. Пулса иртнĕ ĕççем пирки летописец пĕр çакна ăнлантарса пама пултарнă: вăл—вырăс çыннисене турă айăпланă тесе пур ĕçе те турă ирĕкĕ çине йăвантарасси пулнă.

Тĕрĕссипе, тутарсен йышлă çарĕсем кăнтăрти Дон лешъенчи çеçенхирсене килсе тухни—этемлĕхĕн чылай пайĕн историллĕ пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан паллă событин результачĕ пулнă.

XIII-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Монголире малтан сапаланса пурăннă монголсен йăхĕсенчен монголсен вăрçăллă-феодаллă пысăк государстви пулса тăнă. Çак государство пуçĕнче Чингис-хан ячĕпе,—урăхла каласан—аслă государь ячĕпе, полководец Темучин тăнă, вăл вăхăтра унăн монголсем хушшинче пысăк чап пулнă. Хăйĕн кӳршисене—тутарсене çĕмĕрсе тăксан,—вĕсемпе çапăçнă чух Темучинăн ашшĕ вилнĕ,—Темучин йăхĕ монгол-тутарсен ятне илнĕ.

Вăл Чингис-хана пăхăнса пурăнакан монголсен йăхĕсене пурне те пĕр организациллĕ пĕрлĕхе пĕрлештернĕ. Чингис-хан государстви хăйĕн характерĕпе вăрçăллă государство пулнă, унăн тĕллевĕ те ютçĕршывсене вăрçăпа туртса илесси пулнă. Çав вăхăтрах государствăн обществăллă структури вăрçăллă организаци пулнă. „Тьмасем“, пинсем, çĕрсем, вуннăсем çине пайланса тăнă монгол йăхĕ-

семпе раттисем феодаллă-хуçалăхлă повинность тытнипе пĕрлех, çар службинче те тăнă.

Тутар çарĕнче тĕп боевой чăмăр—çĕр сынран тăракан отряд пулнă. Юланутçăсем кашни йĕркене вуншар çын тăнă. Тăшман çине атакăпа кайнă чух иккĕмĕш йĕркерисем вăрăм сăнăсене малтисен хулпуççийĕ çине хунă, çапла вара икĕ йĕрке сăнă пулса тăнă. Вунă çын пуçĕнче десятник тăнă, ăна тăхăр воин пăхăннă, çĕр çын пуçĕнче—сотник, унăн яланах хăйĕн десятки. пулнă, пин çын пуçĕнче тысячник тăнă. Вунă пин çынлă çара „тьма" тенĕ, унăн начальникне—„темник" тенĕ.

Монголсен йăхĕсене хăйĕн влаçне пĕрлештерсе çитерсен, Чингис-хан кĕске вăхăтрах Çурçĕр Китая пăхăнтарнă, виçĕ çула та яман, пĕтĕм Вăтам Азие (Туркестана) туртса илнĕ. Монгол çарĕсен пĕр пайне, Джебе тата Субэдэ полководецсем ертсе пынипе, Ирана тарнă Хорезм шахне хăваласа тытма янă, ун хыççăн пырса çак полководецсем Çурçĕр Иран урлă Кавказа, Ширван ту хушши урлă каçса—Çурçĕр Кавказа, унтан Атăлпа Дунай хушшинчи кипчаксен çĕрĕсем çине кайнă та, вырăссемпе кипчаксен вăйĕсене Калка шывĕ хĕрринче çĕмĕрсе тăкнă. Вырăс князĕсене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн Атăл тăрăх пырса Кама Атăла юхса кĕнĕ вырăна çитиччен хăпарсан, монголсен çарĕсем булгарсен çĕрĕсем патне çитнĕ, анчах кунта вĕсем пысăк поражени курнă, вара, Чингис-хан чĕнсе илнĕ пирки, Азие тавăрăннă.

Тутарсем, вăл сăмаха тĕрĕссипе калас пулсан, çав çарсенче ытлашши нумаях пулман. Вĕсем монголсен çарĕсен тĕп чăмăрĕ пулнă, унта командлăй вырăнсене йышăнса тăнă. Чингис-хан çарĕн пысăк пайĕ тутарсенчен мар, тĕрлĕрен тюрк йăхĕсенчи халăхсенчен тăнă. Тăшман хушшинче уйрăмлăх тумасăр, вĕсене пĕр ятпа—тутарсем тенĕ.

Чингис-хан юмахри пек хăвăртлăхпа темĕн чухлĕ çĕрсем тата нумай йышлă халăхсем тытса илни—вăл вăхăтра пурăнакансене пурне те пăшăрхантарса, хăратса ӳкернĕ.

Вӑтам Азире те, Европӑра та тутарсем тапӑннине культурӑллӑ ҫӗршывсене пӗтерессипе хӑратакан пысӑк инкек вырӑнне хунӑ.

Перҫири пӗр историк ют ҫӗрсене туртса илекен тутарсем ҫинчен ҫапла ҫутатса парать: „Вӗсен арӑслан паттӑрлӑхӗ, йытӑ чӑтӑмлӑхӗ, тӑрна асӑрхавлӑхӗ, тилӗ чеелӗхӗ, ҫӑхан пек аякран курасси, кашкӑр тискерлӗхӗ, автанӑн пек ҫапӑҫу хастарлӑхӗ, ҫывӑхрисемшӗн чӑхӑ пек тӑрӑшасси, кушак сиҫӗмлӗхӗ, тапӑннӑ чух вепрь тискерлӗхӗ пулнӑ".

Чингис-хан вӑхӑтӗнче пурӑннӑ арабсен историкӗ Ибн-эльб-Асира тутарсем тапӑнни ҫинчен ҫапла ҫырать: „Акӑ (мӗнле пулчӗ ҫакӑ), хӗмӗсем (пур еннелле те) тата усалӗ пурин ҫине те саланнӑ событи; вӑл ялсем тӑрӑх ҫил хӑвалакан хура пӗлӗт пек пынӑ".

Ҫак хура пӗлӗт каҫса кайнӑ ҫӗршывсем ҫаралса юлнӑ. Чингис-ханӑн тӗп ҫар законӗсенчен пӗри ҫапла пулнӑ: тӑшмана каҫару памалла мар, мӗншӗн тесен, каҫару результачӗ—шелесси,—ку сисӗме вара воин пӗлме кирлӗ мар.

Ибн-эльб-Асира Кавказри хӑшпӗр халӑхсене пӗр ҫын юлми пекех вӗлерсе пӗтерни ҫинчен калать, вӗсен юлашкисем Дагестанри йышлӑ сӑртсем хушшине тарса пытаннӑ.

Вӑтам Азири пысӑкрах хуласенче—Бухарара, Самаркандра, Мервра т. ыт. хуласенче пурӑнакан халӑхсене вӗлерсе пӗтернӗ.

Тутар полкисем хӑйсен ҫулӗ ҫинче тӗл пулакан хуласене ҫӗмӗрсе тӑкасси правило вырӑннех пулнӑ. Хула халӑхӗ парӑннӑ пулсан та, хулана ҫавах ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, хула ҫыннисене вара килҫуртсене пӑрахса часрах хула хыҫне тухма хушнӑ. Хулана ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн, яланхи пекех, чӗрӗ юлнӑ ҫынсене валеҫме тытӑннӑ. Тыткӑна илнисене е чура туса хунӑ, е вӗсемпе вӑрҫӑ ӗҫне тунӑ ҫӗрте усӑ курнӑ.

Тутарсем каҫса кайнӑ ҫӗршывсем ҫаралса юлнипе, вун-

шар çулсем хушши ураланма пултарайман. Халĕ Совет Союзĕнчи республикăсене кĕрекен территорисенче унчухне пурăннă нумай халăхсене çĕмĕрсе тăкнă, нумай вăхăта юхăнтарса хăварнă. Вăтам Азири пĕтĕм пуян, чечекленсе ларакан хуласене ишĕлтернĕ, вĕсем çынсемсĕр тăрса юлнă. Искусство тата ремесло аталанăвĕ чарăнса ларнă. Аркатса тăкнă нумай хуласене халăхсем яланлăхах парахса кайнă, вăл хуласем текех ура çине тăрайман.

Хăшпĕр хуласенчен халиччен ишĕлчĕк юлашкийĕсем кăна сыхланса юлнă.

Тутар çарĕсем Арменипе Грузине те нумай çаратса хăварнă.

Малтанхи вăхăтра тутарсем Грузия халăхĕнчен хырçă пуçтарнипе тата пулăшакан çар пама ыйтнипех килĕшсе пурăннă, анчах кайран çĕршывăн шалти ĕçĕсене те хутшăнма пуçланă. Ку пĕтĕм хуçалăхшăн вилĕм пекех пулса тăнă. Суту-илӳ ĕçĕ вăйсăрланнă. Ремеслосем хыттăнах чакнă. Хресченсем нумайăн хăйсем ĕçлесе тăнă князьсен çĕрĕсем çинчен тарнă. Грузинсен нумай пулмасть кăна чечекленсе ларакан провинцийĕсем нумайĕшĕ çаралса пынă.

Тутар çарĕсен вăрçăри ăнăçлăхĕ çак сăлтавсенчен килнĕ: вĕсен çарĕ йышлă, боевой опычĕ пысăк, çар дисциплини çирĕп пулнă, вырăнтан вырăна хăвăрт куçса çӳреме пултарнă, çар организацийĕ чăтăмлă тата çар техники вăйлă пулнă.

Тутарсен çарĕнче çуррансар полкисем пулман. Пур салтаксем те лашасемпе пулнă, çав вăхăтрах, тутарсем куçса çӳрекен халăх пулнă пирки, вĕсен яланах запасра лашасем нумай пулнă, вĕсем вара час-часах çапăçу вăхăтĕнче урăх лашасем çине куçса ларма пултарнă.

Тутарсен хĕçпăшалĕ çакăн пек пулнă: ухă, сăнăсем тултарнă колчан, пуртă тата крепоçсене илмелли машинăсене сĕтĕрсе пыма вĕрен пулнă.

Тăшмана лаша çинчен туртса антарма сăнăсем çинче юри тунă крючек пулнă. Çавна валлиех кашни тутар сал-

такĕн аркан пулнă. Кусемсĕр пуçне кашни салтакăн хĕç-пăшала çивĕчлетме подпилка, пăшатан, йĕпсем, çипсем тата шакăрчча пулнă. Чи пуяннисен кукăр хĕç пулнă, тимĕр шлемсем тата тир çине тимĕр пластинкăсем çапса тунă броньăсем тăхăннă.

Хуласене туртса илме тата хула стенисене аркатма тутарсем тĕрлĕ машинăсемпе усă курнă. Вĕсен стенасене аркатмалли машинăсем (пороксем, катапультсем) тата хупăрласа илнĕ хуласем çине çунакан нефть сапса аякран, пысăк сăнăсем ывăтакан машинăсем нумай пулнă. Крепоçсене çĕмĕрмелли техникăна вĕсем пуринчен ытла Китай çыннисенчен вĕреннĕ. Çунакан нефтьпа усă курма пĕлни тутарсене çапăçура пысăк вăй панă. Йывăçран тунă тата канатсемпе ĕçлеттерекен тĕрлĕрен машинăсене хирĕç Вăтам Азири, Китайри, Европăри хуласен тăм стенисем те, чул стенисем те тӳсме пултарайман. Хупăрласа илнĕ хула çине аякран машинăсемпе пăрахакан хăйне майлă бомбăсем—çунакан нефтлă тăм чӳлмексем—хулара вăйлă пушар кăларнă, хулана хӳтĕлекенсем вара çунакан бомбăсемпе сăнăсене хирĕç нимĕн те тума пултарайман.

Тутарсен çĕнтерĕвĕсенче ултавсемпе усă курасси те пĕчĕк вырăнах йышăнман.

Вĕсен тактикин тĕп уйрăмлăхĕ—тăшмана вăйпа çĕнтернинчен ытларах чеелĕхпе çĕнтересси пулнă. Час-часах хăйсем хупăрласа илнĕ хула паттăрăн, нумай вăхăт хирĕç тăнине курсан, вĕсем ăна ирĕклĕн парăнма ыйтнă, никама тивместпĕр тесе тупа тунă. Анчах вĕсене хула хапхине уçса кĕртсенех, вĕсем хулана хӳтĕлекенсене пурне те касса тăкнă е тыткăна илнĕ. Тата çакăн пек те тунă: тăшмана улталаса хăйсем малтанах лартса хунă танатана астарса кĕртес сăлтавпа юриех каялла чакнă. Тутарсен юратнă меслечĕ тăшмана пур енчен те çавăрса илесси пулнă. Пĕр-пĕр çĕршыва çĕнтерсен, тутарсем çавăнтах пулăшакан çар пама ыйтнă, çавăнпа вĕсен çарĕсен шучĕ пĕрмаях ӳссе пынă. Çак пулăшакан çарсене шанчăклăрах вырăнсене янă. Çавăн пирки тутарсен тĕп

вăйĕсем яланах çĕнĕ пекех пулнă, пĕтме те сахал пĕтнĕ. Çапăçу вăхăтĕнче тарнăшăн е унтан пăрăнса юлнăшăн тӳрех çакса вĕлернĕ.

Пĕрмай вăрçăпа пурăнакан тата хăйсемпе пĕрле пĕтĕм пурлăха куçарса çӳрекен çынсенчен тăракан тутар çарĕсем, тĕрĕссипе, куçса çӳрекен хĕçпăшаллă халăх пулнă. Татти-сыпписĕр вăрçăра пулнă пулин те вĕсем хăйсен çемьисемпе пурлăхĕсене хăйсемпе пĕрлех куçарса çӳренĕ. Ялан пурăнакан вырăнпа çыхăнман тутарсем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна хăвăрт куçма пултарнă. Вĕсене пĕртен-пĕр ялан кирли вăл—выльăхĕсемпе лашасем валли апат тупасси пулнă. Хăйсен лашисен çапăçу пахалăхне сыхласа усрас тесе, тутарсем кашни çул темиçе уйăх хушши пĕр-пĕр вырăнта чарăнса тăнă, вăл вăхăтра лашасем каннă, самăрланнă. Хăйсене тӳлек канăç тăвас, кĕтмен çĕртен тапăнасран сыхланас тесе, тутарсем, пĕр-пĕр вырăна чарăнса тăриччен малтан, вăл таврари çĕрсен пысăк талккăшне çаратса тухнă.

Пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳреме пултаракан чăтăмлă, лайăх дисциплинăллă, пĕр командованине пăхăнса тăракан тутар çарĕ пит пысăк вăй пулнă, нимрен ытла вăл—сыхлăха кирлĕ пек организацилеме пултарайман, вăйлă пĕр центра пăхăнса тăракан государство влаçĕ çук çĕршывсемшĕн пысăк хăрушлăх пулнă.

## Вырăс çĕрĕ тутарсем тапăнса киличченхи вăхăтра

XII-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче, урăхла каласан, тутарсемпе малтанхи хут тытăçиччен пăртак çеç маларах, вырăс çĕрĕ сапаланчăк, феодаллă çĕршыв пулнă. Малтанхи вăхăтра вăйлă, Грецине хирĕç, куçса çӳрен халăхсемпе ытти халăхсене те хирĕç çĕнтерӳллĕ вăрçăсем тума пултарнă Киев государстви майĕпен хăйсене уйрăм тăракан вак княжествăсем çине сапаланма пуçланă. Киев государстви

сапаланасси—ҫёршывра пӗр алӑра ҫӗр нумай тытас ӗҫ аталаннинчен килнӗ.

Шултра ҫӗрхуҫисем—князьсемпе боярсем—пысӑк ҫӗрсем туртса илнӗ, ҫак ҫӗрсем ҫинче пурӑнакан смердсене (хресченсене) чуралантарнӑ, вӗсене князьсемпе боярсен ҫӗрӗсем ҫинче ӗҫлеттернӗ, ирӗклӗ смердсене феодала пӑхӑнса тӑракан крепостной хресченсем туса хунӑ. Ҫапла вара ҫӗнӗ производствӑллӑ отношенисем—феодаллӑ отношенисем аталаннӑ. Киев государствине кӗрекен феодалсен уйрӑм княжествисем хуҫалӑхпа политика тӗлӗшӗнчен ӳснӗ. Кашни князь уйрӑм пулма, хӑйӗн княжествине ытти князьсенчен ирӗклӗ тума тӑрӑшнӑ. Уйрӑм князьсем пуйнӑ, аслӑ Киев князьне пӑхӑнми пулса тӑнӑ.

Чылай вакӑ, пӗр-пӗринчен уйрӑм пурӑнакан, пӗр-пӗринпе яланах ҫапӑҫса пурӑнакан феодаллӑ княжествӑсене пайланнӑ ҫӗршыв хӑйне йӗри тавра хупӑрласа тӑракан тӑшмансене хирӗҫ тӑма пултарайман.

Половецсем, поляксем, нимӗҫсем, литовецсем, венгерсем, малтан вӑйлӑ пулнӑ кӳршӗн вӑйсӑрлӑхӗ пӗрмай ӳссе пынипе усӑ курса, ерипен Полоцк, Галиция, Волынск тата Смоленск княжествисене кӗрекен территорисене турта-турта илнӗ.

„Слово о погибели русской земли“ ятлӑ произведенин паллӑ мар авторӗ Киев ҫӗрӗн малтанхи чиккисем пирки хуйхӑрса ҫапла аса илет: Всеволод тата Владимир Мономах вӑхӑтӗнче „Литва хӑйӗн шурлӑхӗсенчен тӗнчене тухма хӑяйман, угрсем (венгерсем) вара чул хуласене тимӗр хапха алӑкӗсемпе ҫирӗплетнӗ... Нимӗҫсем—хӑйсем кӑвак тинӗс хыҫӗнче инҫетре пурӑннӑшӑн хӗпӗртенӗ“, тет. Киев ҫӗрӗн чаплӑ та мухтавлӑ самани иртнӗ. Анчах та Киев ҫӗрӗнчен хуҫалӑхпа политикӑллӑ ҫӗнӗ центрсем уйӑрӑлса тухнӑ, вӗсенчен чи паллӑрах та вӑйлӑраххисем: Аслӑ Новгород, Галицко-Волынск ҫӗрӗ тата Суздаль ҫӗрӗ пулнӑ.

Ҫак Киев государствин пӗр пайӗ пулнӑ ҫурма государствӑсен кунҫулӗ тӗрлӗрен пулнӑ.



**XIII ĕмĕрти боярсен усадьби.**
*Государствăн историллĕ музейĕн макет-экспозицийĕ.*

Малти вырӑна—феодаллӑ, аристократиллӗ пуян республика пулса тӑнӑ Новгород тухса тӑнӑ. Унта пӗтӗм пуянлӑх боярсемпе купецсен аллинче, политикӑллӑ власть вара—формӑшӑн халӑх аллинче (вече) пулнӑ пулсан та, тӗрӗссипе шултра феодалсен-боярсен аллинче пулнӑ. Новгородра князь влаҫне Новгород боярӗсем пӳлсе тӑнӑ. Карелсем, лопарсем, коми, удмурдсем, остяксем тата ытти халӑхсем те пурӑнакан пысӑк ҫӗршывсем Новгорода пӑхӑнса тӑнӑ; вӗсем новгородецсене хырҫӑ тӳленӗ, новгородецсем организациленӗ тӑвар, вӑрман промыслисенче ӗҫленӗ. Уралпа Шурӑ тинӗс патне ҫити сарӑлса выртакан ҫак пысӑк колонисене эксплоатациленисӗр пуҫне Новгород боярӗсем, купецсем, аслӑ духовенство хресчен халӑхне—смердсене эксплоатацилесе пуянлӑх пит нумай пухнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех Новгород хуҫалӑхӗн пурнӑҫӗнче суту-илӳ те пысӑк вырӑн йышӑннӑ.

Новгород „Варягсем патӗнчен грексем патне" каякан аслӑ шыв ҫулӗ ҫинче (Финский залив—Нева—Ладожское кӳлли—Волхов — Илмень—Ловать—Хӗвеланӑҫ Двина—Днепр—Хура тинӗс) пысӑк усӑ паракан вырӑнта ларнӑ. Ҫак ҫула питӗрсе хурсан та Новгород хӑйӗн суту-илӳне аталантарас ӗҫре ним чухлӗ те аптраман.

Вырӑс суту-илӳне Азипе ҫыхӑнтарса тӑракан центр малтан Греция пулнӑ. Суту-илӳ ҫулӗ Вӑтаҫӗр тинӗсӗ ҫине куҫнӑ хыҫҫӑн, ҫавӑн пек ҫыхӑнтарса тӑракан пунктсем вырӑнне нимӗҫсен тинӗс ҫыранӗсен хӗрринчи хуласем пулса тӑнӑ; вӗсем XIII-мӗш ӗмӗрте Ганза е Ганзейский союз текен пысӑк та вӑйлӑ суту-илӳ союзӗ тунӑ. Новгорода таварсем турттарса тӑрасси икӗ ҫулпа пулса пынӑ: ҫулла карапсемпе—Балтий тинӗсӗ, Нева юханшывӗ, Ладожское кӳлли тата Волхов урлӑ, хӗлле типӗ ҫӗртен—Псковпа Нарва урлӑ.

Хресчен халӑхне тата пӑхӑнса тӑракан облаҫсене эксплоатацилени, суту-илӳ анлӑн аталанни—Новгородри пуҫпулса тӑракан классен пуянлӑхӗ пӗрмай ӳссе пымалли, вӗсен князь влаҫне пӑхӑнасмарлӑхӗ ӳссе пымалли никӗс пулнӑ.

Новгород, шултра суту-илӳ центрӗ пулнӑ май, мӗнпур вырӑс ҫӗрӗсемпе тата облаҫӗсемпе ҫыхӑнса тӑнӑ, вӗсен хушшинче вӑл уйрӑм, хӑйне майлӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

Вырӑс ҫӗрӗсен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнче XII-мӗш ӗмӗр вӗҫӗнче Галиципе Волынь княжествисем Волынь князӗн Роман Мстиславскин аллине кӗрсе пӗрлешнӗ.

Волынь княжестви (унӑн тӗп хули Владимир-Волынский пулнӑ) Хӗвеланӑҫ Буг юханшывӗн сылтӑм ҫыранӗнче Кӑнтӑр Буг юханшывне ҫитех сарӑлса выртнӑ. Галиция княжестви икӗ пайран тӑнӑ: ту-сӑртлӑ тата тӳрем пайсем. Ту-сӑртлӑ пай (унӑн тӗп хули Галич пулнӑ) Карпат тӑвӗсен хӗвеланӑҫ енче вырнаҫса тӑнӑ. Тӳремлӗ пай—ҫурҫӗрелле, Хӗвеланӑҫ Буг патнеле сарӑлса выртнӑ, ӑна „Червен хулисем“ тенӗ. Ҫак княжествӑсенчен чи вӑйлӑраххи Галиция княжестви пулнӑ, вӑл ҫак пурте йышӑннӑ хӑватлӑха „Слово о полку Игореве“ авторӗ мухтаса ҫырнӑ Ярослав Осмомысл вӑхӑтӗнче ҫитнӗ. Галиция князӗ мӗн тери пысӑк вырӑн йышӑннине поэт ҫырнинчен курма пулать:

„Галицияри Ярослав Осмомысл. Эсӗ ҫӳлте хӑвӑн ылттӑнран тунӑ престол ҫинче, хӑвӑн вӑйлӑ полксемпе Карпат тӑвӗсене тӗкӗленсе ларатӑн (автор кунта Ярослав Венгрия корольне хирӗҫ ӑнӑҫуллӑ пысӑк ҫапӑҫусем туса ирттерни ҫинчен тата Карпатсем патне пымалли ҫулсене ҫирӗплетсе лартни ҫинчен каласшӑн—Б.Ф.); Дунай патне пымалли ҫула пӳлсе тӑратӑн (Ярослав владенийӗсем тинӗсе Дунай юхса кӗнӗ ҫӗре ҫитнӗ, ҫак шыв ҫинчи пӗтӗм суту-илӳ ӗҫӗ ун аллинче тӑнӑ—Б.Ф.); йывӑр япаласене пӗлӗт урлӑ яратӑн (ҫарсемпе суту-илӳ обозӗсене пӗлӗтпе витӗннӗ тусем урлӑ выртакан ҫулсемпе ярса тӑни ҫинчен калана—Б.Ф.); Дунай патне ҫити суд туса ларатӑн. Санӑн хаяр ӗҫӳсем ҫинчен пур ҫӗршывсем тӑрӑх та сӑмах ҫӳрет; эсӗ Киев хапхисене уҫатӑн (урӑхла каласан—Галиция ҫӗрне Киев таварӗсем пыраҫҫӗ—Б.Ф.), аҫун ылттӑн престолӗ ҫинчен ютҫӗршывсенчи султансене ҫӗнтеретӗн (Ви-

зантия туркӑсене хирӗҫ вӑрҫнӑ чухне ҫак вӑрҫа Галиция князӗсем хутшӑнни ҫинчен каланӑ—Б.Ф.)".

Ҫапла ӗнтӗ, „Слово о полку Игореве" авторне, Ярослав ют государствӑсемпе ҫыхӑну тытни тата Киеври ӗҫсем ҫине влияни пама пултарни паллӑ пулнӑ.

Галиция князӗсен хӑватне пурте йышӑннӑ пулин те, княжествӑра хӑйӗнче вара вӗсен влаҫне боярсен аристократийӗ чылаях пӳлсе тӑнӑ. Волыньпа Галиция княжествисене пӗрлештернӗ хыҫҫӑн, Роман Мстиславович боярсене хирӗҫ уҫҫӑнах кӗрешме пуҫланӑ, анчах та вӑл феодалсене пӗтӗмӗшпех ҫӗнтерме пултарайман. Роман Мстиславович ывӑлӗ—Даниил Романович князь влаҫне чылаях ҫирӗплетнӗ, Галицко-Волынски княжество пӗлтерӗшне тата ытларах хӑпартнӑ, анчах та, хӑйӗн ӑшшӗ пекех, боярсен, феодалсен аристократине хӑйӗн ирӗкне пӑхӑнтарма пултарайман. Галицко-Волынски княжество, шалти харкашусем нумай пулнӑ пирки, Галицияпа Волынь пуян ҫӗрӗсем ҫине ҫӑтканла пӑхакан вӑйлӑ кӳршӗсем—поляксем, венгерсем, литовецсем хупӑрласа тӑнӑ пирки, хӑйне хула халӑхӗ хытӑ кӑмӑллланӑ пулин те, феодалсен хирӗҫӗвне парӑнтарса вырӑс ҫӗрӗсене пӗрлештерекен национальнӑй центр пулма пултарайман.

Вырӑс халӑхӗн малаллахи историйӗнче ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫӗнчи феодаллӑ княжествӑсем пачах уйрӑм вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

Князьсен 1097 ҫулта Любечра пулнӑ съездӗнче Суздаль крайне Владимир Мономаха панӑ, вӑл ҫӗр кайран та ун йӑхӗсен аллинчех юлнӑ. Малтанласа сахал халӑхлӑ пулнӑ Суздаль ҫӗрӗ питӗ лайӑх вырӑнта тӑнӑ. Лӑпкӑ мар кӑнтӑртан вӑл талкӑшпе тӑсӑлса выртакан каҫма ҫук ҫӑра вӑрманпа уйӑрӑлса тӑнӑ. Ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ Русь халӑхӗн тӗп масси—мӗн авалтанпах кунта пурӑнакан славянсен пысӑк йӑхӗ—вятичсем пулнӑ. Кайрантарахри вӑхӑтра Новгородран, Вӑтам Двина ҫӗрӗ ҫинчен, ҫавӑн пекех Днепр шывӗн ту вӗҫӗнчен килекен славян колонисчӗсем куҫса ларма пуҫланӑ.

Суздаль княжествин хуçалăх аталанăвĕшĕн—вăл Новгородпа, Булгар патшалăхĕпе тата Крымпа çыхăнтарса тăракан лайăх шыв çулĕсем çинче пулни пысăк вырăн йышăннă. Суздаль княжествин аслă çĕрĕсем витĕр Ока шывĕн вăтам тата анат вĕçĕ, Атăлăн тури тата вăтам енĕ, Клязьма тата Мускав шывĕ юхса иртнĕ. Çав шыв çулĕсемпе Новгород хăйĕн таварĕсене вырăссен шалти облаçĕсене янă, хăйне кирлĕ тырă-пулă илсе тăнă. Ку, паллах, Суздаль çĕрĕшĕн лайăх пулнă.

Вăрмансемпе, шывсемпе пуян Суздаль çĕрĕ халăха вăрман промыслисемпе пурăнма (хурт-хăмăр ĕрчетесси, тикĕт юхтарасси, пушăт-мунчала тăвасси, сунара çӳресси т. ыт.) май панă, çавах та халăхăн тĕп ĕçĕ—çĕр ĕçлесси пулнă. Суздаль çĕрĕ хуçалăх тĕлĕшĕнчен хăвăрт аталанвине çĕнĕ хуласем шăтса ӳсни те лайăх кăтартса панă, вăл хуласенчен пĕр пайĕ хăй тĕллĕнех пулса тăнă, теприсене князьсем халăхран хырçă пухма лартнă. Çавăн пек, тĕслĕхрен, Юрий Долгорукий: Дмитров, Юрьев-Польский, Константинов хулисене лартнă. Ун вăхăтĕнчех Тверь, Кострома, Городец, Стародуб, Галич, Звенигород, Вышгород хулисем пулса тăнă. Вăл князьра ларнă вăхăтра летопись пуçласа (1141 ç.) Мускав хулине асăнать. Кăшт малтанрах Владимир Мономах вăхăтĕнче Клязьма çинчи Владимир хулине лартнă. Çак хуласенче пурăнакан тĕп массăна—алăстисемпе суту-илӳçĕсене—çирĕп государство влаçĕ кирлĕ пулнă. Çавăнпа та вĕсем князь влаçĕ ӳсессине хирĕç тăракан кивĕ боярсене хирĕç кĕрешес ĕçре Суздаль князĕсене хаваслăнах пулăшнă.

Çĕнĕ хула çыннисем князьсене пулăшни Суздальри кивĕ феодалсене тарăхтарнă, кĕвĕçтернĕ. Кивĕ феодалсен пуçĕнче Ростов боярĕсем тăнă. Вĕсем çĕнĕ хуласенчен пуринчен ытла Владимир хулине курайман. Ростов боярĕсем Владимир çине хăйсен хула çумĕ çине пăхнă пек пăхнă, çыннисене хăйсен холопĕсем (тарçисем) тесе шутланă. „Пирĕн княжествăра Владимир хули çук,—тенĕ вĕсем летописец сăмахĕ тăрăх,—анчах вăл пирĕн хула


ЧУВАШОКАТ КНИЖНАЯ ПАЛАТА

аслă ывăлĕ Константин пулăшнипе (ăна ашшĕ аслă княжествăра князь пулас правасăр хăварнă) тата новгородецсем пулăшнипе тепĕр хут влаçа тытса илме хăтланса пăхнă. Çакăн пирки Суздаль княжествинче темиçе çул хушши пынă феодальнăй вăрçă хыççăн, Суздаль княжестви хăйне уйрăм пилĕк княжествăна вакланнă: Владимир, Ростов, Переяслав, Юрьев, Стародуб княжествисем. Всеволод ывăлĕсенчен пĕри Владимир князĕ Юрий Всеволодович, мордвасен çĕрĕсене туртса илсе пăхăнтарнипе, хăйĕн владенисене чылаях аслăлатнă. 1221 çулта, Ока Атăла юхса кĕнĕ çĕрте, Суздальпе Владимир çарĕсем мордвасемпе булгарсем çине похода кайма пухăннă вырăнта, вăл Чулхула (Нижний-Новгород) никĕсне хывнă.

Всеволод ачисен вăхăтĕнче Владимиро-Суздаль княжестви вакланасси татах вăйланнă. Владимиро-Суздаль княжествинчен уйăрăлса тухнă вак княжествăсен шучĕ пурĕ вуникке çитнĕ. Вĕсенчен пĕри Владимир княжествинчен уйăрăлнă Мускав княжестви пулнă.

Çапла ĕнтĕ, тутарсем тапăнас умĕн вырăс çĕрĕ политика тĕлĕшĕнчен вакланса пĕтнĕ пулнă. Кашни уйрăм область, кашни княжество хăйĕн уйрăм пурнăçĕпе пурăннă, ытти княжествăсемпе тупăшнă, вăйсăртарах кўршĕнне çĕрĕсемпе пурлăхĕсене тытса илме тăрăшнă. Облаçсемпе княжествăсенче феодальнăй аристократипе князьсем хушшинче влаçшăн пĕр татти-сыпписĕр çапăçу пынă.

Вакланса пĕтнĕ, пĕрмай шалти çапăçусемпе тата феодальнăй вăрçăсемпе вăйсăрланнă вырăс çĕрĕ вăл вăхăтра ютçĕртен килнĕ вăйлă тăшмана—тутарсене хирĕç тăма пултарайман.

## Батый тапăнса килни

Темучин вилнĕ хыççăн (1227 ç.) çĕнĕ хан Угэдэ Темучин ачин ачине Батуна (Батыя) Субэдэ (Субутай) полководецпа пĕрле кăнтăр-хĕвелтухăç Европăна çапăçса илме янă. Каспийпе Азов тинĕсĕсем хушшинчи мĕнпур çĕрсене йы-



Тутарсемпе монголсен утлă çарĕ походра.

шăнса илсен, Бату 1236 çулта Вăтам Атăл патне кайнă та, Атăл çинчи булгарсене çĕмĕрсе тăкса вĕсене хăйĕн влаçне пăхăнтарнă. Тепĕр çулĕнче, 1237 çулта, Бату Рязань княжестви чиккисем патне çывхарса пынă, Рязань князĕсене хăйне пăхăнса тăма хушнă тата пур князьсемпе ахаль çынсенчен те хырçă, пурлăхăн вунăмĕш пайĕ чухлĕ, кашни вунă шурă, хура, сăрă, çӳрен, ула лашаран пĕрне пама ыйтнă. Рязань князĕсем, малтан Муром тата Прон князĕсемпе канашласа пăхса, тутар çар начальникĕсем ыйтнипе килĕшмелле мар тума тата вĕсене хирĕç тăма йышăннă. Хăйсен çарĕсем сахал пулнине шута илсе, вĕсем Владимир (Суздаль) аслă князĕ Юрий Всеволодович тата Чернигов князĕ Михаил Всеволодович патне пулăшу ыйтса çынсем янă. Унта та, кунта та вĕсене отказ pană. Феодалсем пĕр-пĕринпе харкашса пурăнни,—çывхарса килнĕ хăрушлăх умĕнче те, пуриншĕн те пĕр пекех пулнă пысăк хăрушлăх умĕнче те вĕсене пĕтĕмĕшлĕ интерессен çӳллĕшне çĕкленме паман. Чернигов çыннисем кăнтăр-вырăс князĕсем Калка çине походпа кайнă чух Рязань князĕсем пулăшманшăн таварса, пулăшу пама килĕшмен; Владимиро-Суздаль князĕ Юрий Всеволодович вара хăйĕн вăйлă соперникĕсенчен пĕрине тутарсем çапса хуçнă хыççăн ку ĕçрен усă çеç курма пултарассине шанса, пулăшу пама килĕшмен. Рязань аслă князĕ Юрий Игоревич пулăшу килес çуккине сиссе, хăйĕн çамрăк ывăлне Феодора пысăк парнесемпе тутарсем патне янă. Анчах ку та пулăшман. Тутарсем посолсенчен парнесене илессине илнĕ, анчах хăйсене пурне те, çав шутрах князь ывăлне Феодора та, вĕлернĕ.

XIII-мĕш ĕмĕрти литературăн интереслă памятникĕсенчен пĕри «Рязанское сказание о нашествии Батыя» ятлă повесть князь ачине вĕлерни çинчен чĕрене тивмелле каласа парать.

Çав калав тăрăх, Рязань посолĕсене Батый ăшă кăмăлпа йышăннă, вĕсемпе килĕшме те хатĕр пулнă, анчах çав вăхăтра пĕр темле предатель—боярин, Батыя: Феодор

арӑмӗ Евпраксия халиччен курман хитре хӗрарӑм, тесе пӗлтернӗ. Батый Феодортан арӑмне пама ыйтнӑ. Феодор хисеплӗн ҫапла ответленӗ: «Хӑҫан пире ҫӗнтеретӗн, ун чух пирӗн арӑмсене те илӗн!»—тенӗ. Батый ҫиленсе кайса Феодора та, унпа пӗрле пынисене те вӗлерме хушнӑ. Упӑшки вилни ҫинчен пӗлсен, Евпраксия пит пысӑк хуйхӑпа ҫӳлӗ стеналлӑ башня ҫинчен сикнӗ те ҫавӑнтах вилнӗ («заразилась»). Ҫакӑнта вара каярахпа Зарайск хули туса лартнӑ, тет калав.

1237 ҫулти декабрӗн 16-мӗшӗнче тутарсем Рязань хулине хупӑрласа илнӗ. Рязань ҫыннисем ултӑ кун хушши паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ пулсан та, тутарсем Рязань ҫине хыттӑн тапӑнса ӑна туртса илнӗ. Хулине ҫаратнӑ, вут тӗртнӗ, ҫыннисене вӗлерсе пӗтернӗ. Рязань ҫӗрӗсем ҫине ҫӗмӗрсе кӗрсе кайса тутарсем вӗсене ним шеллемесӗр аркатнӑ, ҫаратнӑ. Кайрантарах тутарсем тапӑннине итог туса, летописец хӑраса ҫапла каланӑ: Батый каҫса кайнӑ ҫӗр ҫинче курӑк та ӳсме пултараймасть, тенӗ. «Рязанское сказание о нашествии Батыя» ятлӑ повесть авторӗ Рязань ҫыннисен паттӑрлӑхӗпе ҫирӗплӗхӗ ҫинчен хавассланса ҫапла калать: «Рязанри харсӑр та маттур йӗкӗтсем пит те вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ, вӗсен айӗнче ҫӗр уласа тӑнӑ. Батый полкисем сехӗрленсе ӳкнӗ». Анчах та тутар ҫарӗсен йышӗ питех те пысӑк пулнӑ пирки паттӑрлӑх та, чӑрсӑрлӑх та вӗсене пулӑшайман, вара вӗсем, тет калав, «пурте пӗр вилӗмпе вилнӗ, пурте пӗр ӗҫшӗн пуҫӗсене хывнӑ, пурте унта пӗрле выртса юлнӑ».

Рязаньрен тутарсем Суздаль ҫӗрӗ ҫине кайнӑ. Суздаль ҫарӗ (ун пуҫӗнче Владимир аслӑ князӗн ачи Всеволод Юрьевич тӑнӑ) тутарсене Коломна патӗнче тӗл пулнӑ. Юнлӑ, хаяр ҫапӑҫу тутарсем ҫӗнтернипе пӗтнӗ—Суздаль ҫарне ҫапса ҫӗмӗрсе салатса янӑ. Всеволод пӗчӗк дружинӑпа Владимира тарнӑ. Тутарсем ун йӗрӗпе пырса, ҫул ҫинче Мускава тытса илсе ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Владимир аслӑ князӗ Юрий Всеволодович вӑл вӑхӑтра войскасемпе Сити шывӗ хӗррине вырнаҫса тӑнӑ. Февраль пуҫламӑшӗнче Владимир

хулине хупăрласа илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах тутарсем вырăссен кивĕ хулине—Суздале илнĕ. Февралĕн 7-мĕшĕнче вара Владимир хулине туртса илнĕ.

Февраль уйăхĕ хушшинче тутарсем Владимиро-Суздаль çĕрĕн пур хулисене те туртса илсе çаратнă. Суздаль княжестви пĕтĕмĕшпех вĕсен аллине кĕрсе ӳкнĕ.

Мартăн 4-мĕшĕнче Сити шывĕ çинче тутарсемпе Юрий Всеволодович çарĕсем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Çав çапăçу вăхăтĕнче Юрий Всеволодовича вĕлернĕ, унăн çарне çĕмĕрсе тăкнă. Суздаль княжествин юлашки çар вăйĕсене пĕтернĕ хыççăн, тутарсем Новгород патнелле кайнă, анчах çуркунне пулнипе çулсем пăсăлнă пирки ун патне çитеймен, вара вĕсем çеçенхире тухас тесе, кăнтăр хĕвелтухăç еннелле çавăрăннă.

Çул çинче вĕсен пысăках мар Козельск хули патĕнче çичĕ эрне хушши чарăнса тăма тивнĕ; ку хула çыннисем тутарсене хирĕç паттăрăн кĕрешнĕ. Тутарсем хула стенисене аркатса тăкса хулана кĕрсе кайсан та Козельск çыннисем хирĕç тăма пăрахман, тутарсемпе алла-алăн тытăçса çапăçнă. Вырăс çарĕсен чăрсăрлăхĕпе паттăрлăхне хăнăхнă пулин те, тутарсем, Козельск çыннисен хастарлăхĕнчен тĕлĕнсе кайнă, вара, летописец каланă тăрăх, Козельска вĕсем яланах «хаяр хула» тенĕ.

Тепĕр çулĕнче, 1239 çулта, тутарсем Переяславльпе Чернигова туртса илнĕ. 1240 çул вĕçĕнче вĕсем Киева хупăрласа илнĕ, литописец каланă тăрăх, «вĕсен вăйĕ пирĕннинчен темиçе хут нумайрах пулнă... урапасем халтăртатнă пирки, нумай тĕвесем çухăрнă пирки, лашасем тулхăрнă пирки тата вĕçĕ-хĕррисĕр нумай халăх кăшкăрнă пирки çынсен сассисем те илтĕнмен». Киев çыннисем хăйсен тăван хулине, хăйсене нихçан та манас çук чапа кăларнă Козельск çыннисем пекех, паттăрăн та чăрсăрăн хӳтĕленĕ. Тутарсем хула çине кăнтăр енчен, Лядский хапхисем патĕнчен тапăнма пуçланă. Вĕсем вырнаçтарса лартнă машинăсем стенасене пĕр татти-сыпписĕр кунĕн-çĕрĕн çĕмĕрсе тăнă. Юлашкинчен стенасенче шă-

тăксем туса тутарсем хулана кĕрсе кайсан, Киев çыннисем хула варрине чакнă та, Десятиннăй чиркӳ умĕнче хăвăрт укрепленисем туса, каллех хирĕç çапăçма пуçланă. Çак кĕрешĕве çырса кăтартнă чух летописец çапла калать: унта вара сăнăсем хуçăлнине, щитсем лапчăннине, сăнăсем çанталăка тĕттĕмлетнине курма пулнă.

Киев çыннисем тутарсене хирĕç вăйлă çапăçнă пулин те, тутарсем пурĕ пĕрех вĕсене парăнтарнă, вырăссен авалхи столицине туртса илнĕ. Ытти хуласем пекех Киева та аркатса тăкнă. Çыннисене хăшне вĕлерсе пĕтернĕ, хăшне тыткăна илсе кайнă, чура тунă. Пĕтĕм Киев çĕрне çаратнă, çĕмĕрнĕ, аркатнă. Çакăн хыççăнултă çул иртсен Ылттăн Ордана кайма тухнă итальянец Плано Карпини хăйĕн пĕтĕм Киев çĕрĕ тăрăх пыракан çулĕ çинче ишĕлчĕк куписем тата хисепсĕр нумай çын шăммисем, пуç шăммисем çеç курнă.

Киев çĕрне аркатса тăксан тутарсем Волыньпа Галиция çĕрĕсем урлă каçнă. Çак пуян та чечекленекен крайăн мĕнпур хулисемпе ялĕсене кĕл туса хăварнă. Вĕлернĕ çын çав тери нумай пулнă; князь Даниил Галицкий, тутарсем кайнă хыççăн Венгрирен хăйĕн крайне таврăнсан, летописец сăмахĕ тăрăх, «уйра вилнĕ çынсем нумай пирки шăршă кĕнипе кайма та пултарайман: Владимир-Волынскинче чĕрĕ çын та юлман, таса турă амăшĕн чиркĕвĕ вилепе тулнă, ытти чиркӳсем те пĕтĕмĕшпех вилнĕ çынсен ӳчĕпе тулса ларнă».

Киев тата Волыньпа Галиция княжествисене çĕмĕрсе тăкнипе тата вĕсене çаратса хăварнипе тутарсем, тĕрĕссипе, вырăс çĕрĕсене туртса илес ĕçе вĕçлесе çитернĕ.

1241 çулти çуркунне тутар çарĕсем Венгрие каçса кайнă, ун хыççăн Силезипе Моравине çаратса тухнă. Чехинче вĕсене вăйлă отпорах панă, вара, çаратса пухнă пуянлăхсемпе тухса, Венгрия, Валахия, Молдавия урлă Анат Атăл патне пынă та кунта чарăнса çĕнĕ пысăк государство—Ылттăн Орда (вăл ылттăн чатăр е ылттăн йăх тени пулать) туса хунă.

Ылттăн Орда столици вырăнне—куçса çӳрен халăхăн малтан чарăнса тăнă вырăнĕ—Сарай пулнă, вăл часах йышлă халăхлă, пуян хула пулса тăнă. Сарай хальхи Сталинград вырнаçнă вырăна хирĕç Атăлăн тепĕр енче пулнă.

Ылттăн Орда йышăннă пысăк территорине çаксем кĕнĕ: Крым, Кавказ—Баку хулине çитиччен, Хорезм (кайранрах—Хива патшалăхĕ, халĕ вăл Узбекистанпа Туркменистан составне кĕрет). Хĕвеланăçĕнче Ылттăн Орда владенийĕ Днестр хыçне Дунай патне çитиех тухнă, хĕвелтухăçĕнче – Хĕвеланăç Çĕпĕре çитиччен сарăлса выртнă, çурçĕр-хĕвелтухăçĕнче—Вăтам Атăл тата Кама çинчи булгăрсен пĕтĕм облаçĕ кĕнĕ.

Вырăс çарĕсем тутар çарĕсемпе малтанхи хут тĕл пулсанах тутарсене хирĕç хаяррăн çапăçма пуçланă. Вырăс халăхĕ хăйĕн ирĕкне паттăрăн сыхланă, анчах та вăл пĕр-пĕринчен уйрăм тăракан княжествăсене вакланнă пирки ун чухне вăйлă, чăрсăр, техника тĕлĕшĕнчен лайăх хĕçпăшалланнă тутар çарĕсене хирĕç тăма пултарайман. Вырăс çĕрĕсен феодаллă сапаланчăклăхĕ тутарсем çĕнтернин тĕп сăлтавĕ пулнă. Вырăссен уйрăм çарĕсем паттăрăн çапăçнă пулсан та, лайăх хĕçпăшалланнă, лайăх организациленнĕ, хăйсенчен темиçе хут йышлăрах тăшманпа çапăçнă чухне поражени тӳсмелле пулнă.

Çапла çĕнтерсе илнĕ ĕнтĕ вырăс çĕрĕсене. Тутарсем вĕсене «улус», Ылттăн Ордана пăхăнса тăракан провинци, тенĕ. Русь çĕрĕнче тутар пусмăрĕ айĕнчи тискер вăхăтсем пуçланнă. Вырăс халăхĕ политика тĕлĕшĕнчен ют çĕршывсенчи тăшмансен аллине кĕрсе ӳкнĕ. Тутар ханĕсем Русь халăхĕн хуçалăхĕнчен кунран кун пĕтĕм пурнăç сĕткенне ĕмсе кăларма пуçланă.

## Тутарсен пусмăрĕ

Тутарсен пусмăрĕ икçĕр çула ытла пынă. Вăл «пусса тăнă кăна мар, вăл хăйĕн жертви пулса тăнă халăхăн чунне кӳрентерсе, типĕтсе тăнă», тет Маркс «XVIII-мĕш ĕмĕрти секретлă дипломати» ятлă статьинче.

Чуралантарнӑ ҫӗршывӑн шалти пурӑнӑҫне тӳррӗнех хутшӑнмасӑр, унӑн обществӑллӑ-политикӑллӑ укладне улӑштарма та хӑтланмасӑр, тутарсем вырӑс князӗсене, управлени пуҫӗнчех хӑварнӑ, вӗсене пӑхӑнса тӑма тата хырҫӑ пухма кӑна хушнӑ. Тутарсен погромӗнчен хӑраса ӳкнӗ вырӑс князӗсем хан ирӗкне хирӗҫ тӑрасси ҫинчен шухӑшлама та хӑяйман. Вӗсен пӗрин хыҫҫӑн теприн хан ставкине ярлык илме—ханран князь пулма право паракан хут илме каймалла пулнӑ. Ылттӑн Орда столицине пуринчен малтан Сити патӗнче ҫапӑҫура вилнӗ Юрий Всеволодович князь шӑллӗ—Владимир князӗ Ярослав Всеволодович кайнӑ. Ют ҫӗршыв летописецӗсемпе пирӗн летописецсем каланӑ тӑрӑх, Батый ӑна пысӑк хисеппе йышӑннӑ, аслӑ князь пулма ярлык панӑ. Ҫакӑ йывӑр ирӗксӗрлӗхрен шведсемпе Ливон рыцарӗсене парӑнтарнӑ Александр Невский та, нимӗҫсене, венгерсене, поляксене ҫӗнтернипе мӑнкӑмӑллӑ пулнӑ Даниил Галицкий те тата ытти князьсем те хӑтӑлса юлайман.

Пуҫпулса тӑракан тутарсем халӑх ҫине йывӑр хырҫӑ хунӑ. Хырҫӑсемпе повинноҫсем ҫав тери нумай пулнӑ пирки хырҫӑ-марҫӑсене тӳлесе татнӑ хыҫҫӑн ахаль те ҫаралса юлнӑ халӑх аран-аран кӑна тӑранса пурӑнма пултарнӑ. Малтанхи вӑхӑтра налогсене тутарсем хӑйсем пуҫтарнӑ. Налог лайӑх килсе тӑмалла тӑвас шутпа, Ылттӑн Орда заданийӗ тӑрӑх, халӑх перепиҫӗ туса ирттернӗ. Ҫак перепиҫе туса ирттерме 1257 ҫулта Ылттӑн Ордаран юриех ҫыруҫсем янӑ, вара вӗсем налог тӳлекенсен спискине тунӑ, тесе пӗлтереҫҫӗ летописецсем. Хырҫӑсене хансен уйрӑм чиновникӗсем—баскаксем пухнӑ, вӗсен хӑйсен аллинче пӗтӗм ҫӗршывӗпех хӗҫпӑшаллӑ отрядсем пулнӑ. Баскаксемпе хирӗҫекенсене пӗчӗк сӑлтавшӑнах ҫакса вӗлернӗ. Тӗп хырҫӑ вырӑнӗнче пулнӑ „ясыксӑр" (тупӑшӑн вуннӑмӗш пайӗ) пуҫне тутарсем тӗрлӗрен промысласем ҫине налогсем хунӑ, рыноксемпе базарсенче сутса илнӗ чух пуҫтарса тӑмалли уйрӑм налог — „тамгу" тунӑ, ҫулсемпе ҫӳренӗшӗн тата кӗперсем урлӑ каҫнӑшӑн пош-

лина илнӗ. Мӗнпур хырҫӑна пӗр ятпа „ордана тухмалли“ хырҫӑ тенӗ. Ханӑн пӗтӗм чиновникӗсем: баскаксем, ҫыруҫсем, хырҫӑ пухакансем, пошлина пухакансем т. ыт. пурте, Ылттӑн Ордаран килнӗскерсем, халӑх шучӗпе пурӑннӑ. Ҫак тискер кайӑксен пӗтӗм ҫарӗ, халӑх хӑйне хӳтӗлеме пултарайманнипе тата хӑйсен пӳлмен прависемпе усӑ курса, хырҫӑ пухнисӗр пуҫне тата хӑйсем пуйса юласшӑн пулса халӑха ҫаратнӑ, хирӗҫ тӑракансене тыткӑна илсе кайнӑ, чуралӑха сутнӑ.

Укҫан пуҫтарнӑ налогсӑр пуҫне халӑхӑн натуральнӑй налогсем нумай тӳлемелле пулнӑ. Повинностьсен шутне, сӑмахран, ҫул повинноҫӗ, урӑхла каласан, иртсе каякан тутар чиновникӗсене лав парасси. Ылттӑн Ордапа ҫыхӑну тытассине лайӑхлатас шутпа тутарсем пӗтӗм ҫӗршывӗпех почта станцисем-ямсем (ҫакӑнтан — ямщик, ямская повинность) организацилене. Ҫав ямӑсене тытса тӑрас ӗҫе вырӑнти халӑх ҫине хунӑ. Тата ытларах ҫаратса тӑкасран хӑранипе халӑх ним хирӗҫмесӗрех вӗсем хушнисене туса тӑнӑ... Тӗрлӗрен повинностьсем хушшинче, ҫавӑн пекех тата, ханӑн кайӑка ҫӳрекен сунарҫисене пулӑшас обязанность пулнӑ. Тутарсем кирек хӑш вӑхӑтра та пӗтӗм яла тискер кайӑксене хупӑрламашкӑн хӑвалаccа тухма пултарнӑ. Укҫан пуҫтарнӑ хырҫӑсем, налогсем, таможеннӑй сборсемпе натуральнӑй повинноҫсемсӗр пуҫне тата Ылттӑн Орда пулӑшакан ҫар парса тӑма хушнӑ.

Тутарсем килсе ҫаратса хӑварнӑ халӑх массисен пурнӑҫӗ тӳсме ҫук йывӑр пулнӑ. Тӳлеме вӑй ҫитмен хырҫӑсене пула тата хан чиновникӗсен пусмӑрне пула питех те тарӑхса ҫитнӗ халӑх сахал мар восстанисем пуҫарса янӑ, намӑса пӗлмен, именмен баскаксемпе откупщиксене вӗлернӗ, ялсенчен хӑваласа кӑларса янӑ. Летописец пӗлтернӗ тӑрӑх, халӑх тутарсем пирки тарӑхни пирвайхи хут уҫҫӑн 1259 ҫулта, тутар влаҫӗсем Новгород халӑхне перепись тума хушсан, палӑрнӑ. Новгород ҫыннисем нумайӑшӗ хан ҫыруҫисемпе баскакӗсене питӗ вӑйлӑн хирӗҫ тӑнӑ. Хӑйсен пурӑнӑҫӗшӗн хӑраса ӳкнӗ баскаксемпе



Баскаксем (тутар чиновникĕсем) хыҫҫă пухаççĕ.

*Иванов худ. картинĕнчен.*

çыруçăсен вара хăйсене хӳтĕлеме салтаксем чĕнмелле пулнă. Ӳкĕтлесе тата хăратса Новгород боярĕсем юлашкинчен çапах та халăха хан указне пăхăнтарттарнă. Пăртак каярахпа çавăн пек халăх пăлхавĕсем Ярославльре, Суздальре, Ростовра пулса иртнĕ. Летопись çав пăлхавсем çинчен 1262 çулта çапла калать:

„... Ростов çĕрĕсене хаяр басурман çыннисен пусмăрĕнчен турă хăтарсам: ирсĕрсен пусмăрне тӳсме пултарайман хресченсен чĕрисене хаярлăх хыв, пĕрле пухăнса хуласенчен, Ростовран, Суздальрен, Ярославльрен хăваласа кăларма пулăшсам...“

Баскаксен йĕркесĕрлĕхĕпе çаратăвĕ çинчен асаилнисем нумай вăхăт хушши халăх юррисемпе халапĕсенче пурăннă. Пуринчен ытла çак хурлăхлăн аса илни Щелкан Дудентьевич çинчен хывнă юрăра вăл яруççăн палăрса тăрать; ку юрă никĕсĕнче историллĕ фактсем тăраççĕ.

Çак юрăра Щелкана виçесĕр хаяр, темле усал ĕç те тума пултаракан çын пек кăтартнă. Хан Азвяк, вăл баскак пулма юрăхлине пĕлес тесе, ăна хăйĕн ачине пусса юнне ĕçме хушать. Щелкан, ним иккĕленмесĕрех хан ыйтнине тăвать те ун хыççăн Тверь хулине баскак пулса каять. Кунта вăл никама та каçару памасть.

... Патшана тӳлемеллисем,
Хырăç-марăçсем
Илнĕ вăл склад Щелкан.

. . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .

Камăн укçи çук,
Унăн ачине илет;
Камăн ачи çук,
Унăн арăмне илет;
Камăн арăмĕ çук,
Ăна пуçĕпех илет.

Чылай чухне хырçă пухас ĕçе укçалла сутнă. Хырçă пухассине сутăн илекенсем хушшивче хĕвелтухăçĕнчи купецсем ытларах пулнă. Хырçă пухас ĕçе сутса-илес

система халӑх пурнӑҫне тата ытларах йывӑрлатнӑ. Часах вырӑс князӗсем хырҫӑ пухас правӑна пӗтӗмпех хӑйсем ҫине илме пуҫланӑ. Ылттӑн Орда правителӗсем вырӑс князӗсен ыйтӑвне тивӗҫтернӗ, мӗншӗн тесен, князьсем халӑхран ҫавах хӑйсене валли тӗрлӗрен налогсем пухаҫҫӗ тата ҫак ӗҫе вӗсем тахҫанах лайӑх пӗлеҫҫӗ,—тесе шутланӑ вӗсем. Ылттӑн Орда хырҫӑ пухас ӗҫе вырӑс князӗсене пама килӗшнин сӑлтавӗсенчен пӗри, — халӑх баскаксемпе откупщиксене хирӗҫ восстанисем туни пулнӑ пулмалла. „Ясык" пухас право вырӑс князӗсен аллине куҫсан, XIII-мӗш ӗмӗр вӗҫӗнче баскаксем пачах пӗтнӗ.

Пӑхӑнтарнӑ ҫӗршыва вырӑс князӗсен управленине парса, пуҫ-пулса тӑракан тутарсем, князьсем хушшинче чарӑна пӗлмесӗр пыракан ҫапӑҫупа хӑйсемшӗн усӑ курнӑ. Чи пуянрах князьсене, урӑхла каласан, хырҫӑ пухса хывассине лайӑхрах туса пыма пултаракан князьсене яланах пулӑшса пырса, вӗсем, ҫавӑнпа пӗрлех, хырҫӑ виҫине ӳстерессине е татах взнос хушса ыйтассине те манса хӑварман. Князь пулма ярлык илессишӗн пыракан кӗрешӳ, хана, унӑн арӑмӗсене тата вӗсене ҫывӑх тӑракан паллӑрах мурзасене парне тавраш тулӑх парассипе пӗрле пулса пынӑ. Ку таранччен пулнӑ аслисен прави халӗ ниме те пӗлтермен. Кам та кам ытларах тӳленӗ е парне нумайрах панӑ, ҫав ним асли мӗнне пӑхмасӑрах пӗр-пӗр княжество валли ярлык илнӗ.

Чиркӗвӗн политикӑллӑ пысӑк рольне шута илсе, тӑшмансем хӑйсем пуҫпулса тӑнӑ хыҫҫӑн пирвайхи кунсенчех, чиркӳпе ырӑ кӳршӗллӗ пулса пурӑнма тӑрӑшнӑ; калас пулать, ку ӗҫе вӗсем лайӑхах тума пултарнӑ. Духовенство кӑмӑлне ҫавӑрас тесе хансем ӑна мӗнпур налогсемпе повинноҫсенчен хӑтарнӑ. Духовенство ҫыннисене, чиркӳсемпе монастырьсене тата вӗсен пурлӑхӗсене кирек те мӗнле регистраципе перепиҫран та хӑтарнӑ.

Духовенство ҫавна кӑмӑлласа, ҫав льготӑсемшӗн, кӗлле кӗнӗ чухне ханшӑн кӗл тунӑ, вырӑс ҫӗрӗсене тытса илекенсен влаҫне, вӗсен мӗнпур законӗсемпе распоряжени-

йĕсене, çав шутрах князьсем хăйсем çинчен халăх çине сулăнтарнă налогсемпе повинноçсене мухтава кăларнă.

Çапла, тутарсем тапăнни тата тутарсен икçĕр çул ытла тăсăлса пынă пусмăрĕ, тутарсем кĕтмен çĕртен пырапыра çĕмĕрни, вĕсем çаратни, хан чиновникĕсем пысăк налогсем илни—çаксем пурте вырăс çĕрĕн экономикăпа культурăллă аталанăвĕ малалла каяссине нумай вăхăт чарса тăнă. Анчах та Монгол çарĕсен тапăнăвне хăй çине илсе, вырăс халăхĕ пĕтĕм Хĕвеланăç Европăна аркатса тăкасран çăлса хăварнă. Маркс „Хронологиллĕ выпискăсенче" çакна пĕтĕм тĕнчешĕн пысăк вырăн йышăнакан историллĕ факт, тесе кăтартать.

## Мускав Руçĕ XIV ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурма пайĕнче тата Ылттăн Орда

Вăйлă феодалсем пĕр-пĕринпе кĕрешесси тата вĕсем хăйсене пăхăнса тăракан вăйсăртарах феодалсене хирĕç кĕрешесси Ылттăн Орда пуçпулса тăрсан та чарăнман, анчах халь унăн характерĕ улшăннă. Пĕтĕмĕшпех хан влаçне пăхăнса тăрса тата князь пулма хан аллинчен ярлыксем илсе, князьсем хăйсен тавлашăвĕсене хĕçпăшал вăйĕпе татса парассинчен ытларах—хан умĕнче йăпăлтатса, хан çыннисене укçа парса татса пама тăрăшнă. Паллах, вăрçăллă тытăçусем те пулнă. Час-часах çак тытăçусем пĕрпĕр енне Ылттăн Орда тутар çарĕсене панипе пулса пынă, анчах та кĕрешӳ мĕнпе пĕтесси юлашкинчен тутар ханĕнчен килнĕ. Феодалсен кĕрешĕвĕн çакă çĕнĕ условийĕсенче ку таранччен пысăках пулман, палăрсах тăман Мускав княжестви питĕ хăвăрттăн тĕрекленсе сарăлма пуçланă. Часах вăл малти вырăна тухса тăнă. Ку княжество географи тĕлĕшĕнчен питех те лайăх вырăнта, Мускав шывĕ Окана юхса кĕнĕ вырăнта, Мускав княжествине Новгород княжествипе шыв çулĕпе çыхăнтаракан вырăнта тăнă. Ытти юханшывсем Клязьма, Уча, Яуза т. ыттисем те княжествăра шалта çӳреме пит те лайăх пулнă. Çаксем пур-

те вĕсем суту-илĕве вăйлатма, Мускав çĕрĕсене халăх куçса ларассине вăйлатма пулăшнă. Тутарсем Мускава çĕмĕрсе тăкнă пулин те, çавах та Мускав княжестви тутар çарĕсем пынă çулăн айккинче пулнă пирки, тутарсем тапăннинчен сахалтарах сиен курнă, вырăс çĕрĕсен варринче пулнă май тутарсем ун çине кăнтăр-хĕвелтухăçри княжествăсем çине тапăннинчен сахалтарах тапăннă. Çавăнпа та Мускав княжестви вĕсенчен хăвăртрах аталаннă, вăл çĕкленсе Руçри шултра феодалла вăйлă княжествăсенчен пĕри пулса тăнă. Мускав княжестви территорине темĕн чухлĕ халăх куçса ларма пуçланă. Çаратассинчен çăлăнăç шыраса Атăл çинче пурăнакансем, Суздаль, Рязань, Ростов çыннисем тата хăрушăсăр вырăн шыракан ытти çынсем те пурте кунта тарса килнĕ. Çакăн пирки халăх йышĕ хăвăрт ӳснĕ, ку вăл вара, хăй черечĕпе, край хуçалăхне вăйлатнă. Çаксем пурте Мускав князĕсен тупăшĕсене ӳстернĕ.

Уссе пыракан вăйпа тата пуянлăхпа усă курса, Мускав князĕсем хăйсен çĕрне тĕрлĕрен майсемпе пысăклатнă. Çĕре ăçта сутăн илме пулать, вĕсем сутăн илнĕ, ăçта ним сиен курмасăрах туртса илме пулать—ăна та туртса илнĕ. Мускавăн пирвайхи князĕ пулнă Даниил Александрович (1283—1303 çç..) Мускав çĕрĕсем çумне Рязань княжествинчен туртса илнĕ Коломнăна хушнă. (Даниил Александрович—Александр Невский ывăлĕ пулнă). Унсăр пуçне тата халав прави тăрăх Переяславле те илнĕ. Даниил Александрович хыççăн князь пулнă Юрий Даниилович (1303—1328 çç..) малтан Смоленск княжествине кĕнĕ Можайск хулине Мускав çумне пĕрлештернĕ.

Çапла вара, Мускавăн малтанхи князĕсемех, вĕсен чăн шухăшĕсем кирек-мĕнле пулсан та, феодалла сапаланчăклăха хирĕç кĕрешме пуçланă, урăхла каласан, вакланса, начарланса пыракан кӳршĕ княжествисен шучĕпе Мускав княжествине аслăлатма пуçланă. Вырăс çĕрне пухасси каярахпа Мускав князĕсен пурин те никĕсри тĕп политика пулнă.

Феодаллă сапаланчăклăха хирĕç кĕрешесси истори тĕлĕшĕнчен прогрессивлă явлени пулнă. Çав вăхăтрах вăл Мускав хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен тĕреклеңсе, ӳссе пынă тĕп сăлтавсенчен пĕри пулнă.

Çав вăхăт тĕлнех Мускав князĕсен аллинче нумай пуянлăхсем пухăннă, вĕсем Тверь князĕсемпе ăмăртма тата Ылттăн Ордаран çине тăрсах аслă князь пулма ярлык илме пултарнă. Малтанхи вăхăтра çак кĕрешӳ мĕнпе пĕтесси паллă пулман, çав ăмăртура Тверь çĕнтерес пек те туйăннă. Ăмăртакансем иккĕшĕ те—Тверь князĕ Михаил Александрович тата Мускав князĕ Юрий Даниилович, Владимиро-Суздаль аслă князĕ Андрей Александрович вилнĕ хыççăн (1303 ç.), пĕр вăхăтра пекех, Ылттăн Ордана кайнă. Кивĕ йăлапа аслă князь пуласси Тверь князь аллине куçмалла пулнă, мĕншĕн тесен, вăл йăхра асли пулнă, анчах ун çине халь никам та пăхман. Юрий Данилович Ордана пырсан, хан çыннисем ун умне çапла ыйту лартнă: „Хырçă укçи Михаил князьран ытларах парсан, сана эпир аслă князь тăватпăр," —тенĕ. Хаклаçу пуçланнă. Юрий Даниилович Михаил Тверскойран ытларах панă. Леш хăйĕн черечĕпе татах хушнă. Анчах Юрий урăх хушман,—вара çак хăйне майлă аукцион Тверь çĕнтернипе пĕтнĕ—аслă князь пулма ярлык Михаил Александрович илнĕ. Анчах Тверь князĕн савăнăçĕ нумай вăхăта пыман. Хан ирĕкне ирĕксĕрех пăхăнмалла пулнă Юрий Даниилович малашнехи кĕрешӳ валли икĕ хут ытла хастарлăхпа вăй пухма пуçланă. Çакă вăл Твершĕн паллă пулнă, вара Михаил Александрович, Мускава вăйланма парас мар тесе, темиçе хут ăна вăйпа тытса илме хăтланнă. Мускав çыннисемпе хула стенисем патĕнче те вăрçнă, анчах çĕнтерме пултарайман.

Çав вăхăтрах Юрий Даниилович хăй шутланă анлă плана тӳсĕмлĕ те çине тăрса пурнăçа кĕртсе пынă. Пулас татăклă çапăçура ăнăçлăх тăвас тесе вăл Ордана кайнă, унта нумай пурăннă та хан йăмăкне Кончака качча илнĕ. Çителĕклĕ вăй пухса, хуньăшĕ пулăшу парасса шанса,

вăйлă çарпа Тверь княжествине кĕрсе, унăн чылай пайне çĕмĕрсе тăкнă. Анчах кайран поражени тӳснĕ пирки Михаил Александровичпа мир тумалла пулнă. Вăрçă ĕçĕсем чарăннă, анчах вĕсем хушшинче кĕрешӳ çаплах пынă. Хан патĕнче интригăсем туса Юрий Даниилович хăйне хирĕçекен Михаил Александрович ятне ярса, ăна Ордана чĕнтермелле тунă, унта вара юлашкинчен хан хушнă тăрăх Михаил Александровича вĕлернĕ. Çакăн хыççăн часах Юрий Данииловича хăйне те Михаил Александрович ывăлĕ Димитрий Михайлович вĕлернĕ. Аслă князь пуласси Тверь князĕ Михаилăн тепĕр ывăлне—Александр çине куçнă.

Тверь çĕнĕрен савăннă, анчах ку савăнăç та кĕске вăхăтлăха çеç пулнă. Юрий шăлнĕ Иван Даниилович хана çывăх тутар чиновникĕсене сутăн илме хăйĕн пуянлăхĕпе усă курса, 1328 çулта аслă князь пулма ярлык илнĕ. Çавăнтанпа Мускав князĕсем çак ярлыка хăйсен аллинче çирĕп тытнă, вĕçне çитиех тĕрĕс политика тытса пынине пула вĕсем Ылттăн Орда енчен те активлă пулăшу илме пултарнă.

Мускавăн малтанхи князĕсен ĕçĕсене характеристика парса Маркс „XVIII-мĕш ĕмĕрти секретлă дипломати" ятлă статьяра çапла калать: „Мускав князĕсем: Юрий Даниилович, уйрăмăнах унăн шăлнĕ Иван Калита (укçа хутаççи) тесе ят панăскер, (1328—1341 çç.) хан умĕнче йăпăлтатса, ханне хăйне тата унăн çывăхĕнчи çынсене хăй енне çавăрса хан Мускав княжествине пулăшу парассине, туяннă".

Вăйсем мĕнлине тĕрĕс виçсе пăхса, Ылттăн Орда пулăшу памасан хăйĕн тăшманĕсене çĕнтерес çуккине ăнланса илсе, Иван Калита мĕнпур майсемпе хан умĕнче шанчăка тухма тăрăшнă. Ылттăн Орда енчен çакăн пек шанса, пулăшу парса тăрасси—Тверь хулинче тутар чиновникĕсене халăх восстанийĕ пулса унта хан посолне Чол-хана (халăх юррисенче ăна Щелкан тенĕ) вĕлернĕ хыççăн хытă ӳснĕ. Аллă пин çынлă тутар çарĕпе пĕрлешнĕ Мускав полкисене ертсе пырса, Иван Калита, хан хушнă

тăрăх, Тверь княжествине çĕмĕрсе кĕрсе ăна хытă аркатса тăкнă, çавăн хыççăн вара летописецăн хуйхăллă сăмахĕсем тăрăх, князьсем „Тверьте пысăк кĕлмĕçлĕхпе чухăнлăхра лараççĕ, пĕтĕм Тверь çĕрĕ çаралса юлнă".

Ылттăн Орда мĕн хушнине туса пынă вăхăтрах, Иван Калита, хăйĕн ĕçĕсене хăйне кирлĕ пек туса яма пултарнă. Унăн кăткăс, пур вак-тĕвеке те вĕçне çитиех шутласа туса пынă политики—хана „... хăйĕн аллинче итлесе тăракан хĕçпăшал" туса хурасси пулнă. Çак хĕçпăшалпа усă курса вăл „хăйĕн чи хăрушă тăшманĕсенчен хăтăлать, влаçа пĕр алăра çирĕплетесси патне çĕнтерӳллĕн пымалли çул çинче тĕл пулакан кирек мĕнле чăрмавсене те çĕнтерсе пырать" (*Маркс*).

Ылттăн Орда влаçне пăхăнса тăракан пур княжествăсенчен те хырçă пухма право илнĕ хыççăн Иван Калита тата пысăк пуянлăхсем пухма тепĕр чи шанчăклă çăлкуçĕ туяннă. Çакна пула вăл, тĕрĕссипе, хăйне чылай княжествăсене пăхăнтарса тăнă. Укçа-тенкĕ пĕрмай пысăккăн илсе тăни Иван Калитăна, çĕрсем, ялсемпе хуласем нумай илме май панă. Мускав княжествин территорийĕ Иван Калита вăхăтĕнче чылаях аслăланнă, унăн хуçалăхлă вăйĕпе политикăллă вăйĕ пысăккăн ӳснĕ. Вара Мускав халăхсене пĕрлештерекен центр пулма пуçланă.

Иван Калита тăрăшнипе вырăс чиркĕвĕн пуçлăхĕ—митрополит Петр Мускава куçни те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Мускав пĕтĕм вырăс çĕрĕсенчи чиркӳсен столици пулса тăнă. Мускав князĕн ĕçĕсемпе мероприятийĕсем çине çавăнтанпа ытти мĕнпур княжествăсенчи халăхсем чиркӳн аслă руководителĕ пилленипе пулса пыракан ĕçсем вырăнне хурса пăхма пуçланă.

Вырăс çĕршывĕнчи нумай йышлă духовенство, Мускав митрополитне пăхăнса тăнипе, Мускава чи инçетри кĕтессемпе çыхăнтарса тăракан хăйне майлă вăй вырăнĕнче пулнă,—халăх хушшинче чиркӳ Мускав çине центр вырăнне хурса пăхас шухăша сарнă. Пĕр центра пăхăнса тăракан организаци пулнă май, чиркӳ хăй те вырăс кня-

жествисен феодаллă сапаланчăклăхне пĕтерессишĕн пулнă, çавăнпа та вăл Мускав князĕсен пĕрлештерес ĕçĕн политикинче активлă помощник пулса тăнă.

Мускав князĕсем тытса пынă политикăн ăнăçлăхĕ кӳршĕ княжествăсенчи феодалсем хушшинче кĕрешӳ пĕр чарăнмасăр пынинчен те килнĕ; унти халăхсем çаратусенчен хăтăлас шутпа пĕрмаях Мускав çĕрĕсене куçа-куçа ларнă. Центрти аслă князь влаçĕ халĕ шалти йĕркелĕхе тытма тата халăха кăшт та пулин хăрушлăхсăр пурăнăç пама пултарнă.

Мускав княжестви мĕн тери вăйланнă, çавăн чухлĕ ун патне ĕçхалăхĕ кăна мар, вак тата вăтам феодалсем— боярсемпе князьсем турттăнма пуçланă. Çавăн пек, тĕслĕхрен, Чулхула боярĕсем хăйсемех Мускав князĕ енне куçнă, хăйсем хыççăн пĕтĕм Чулхула халăхне те ертсе кайнă. Киеври паллă боярин Родион Нестерович Иван Калита патне 1700 çынпа пĕрле куçнă.

Вак тата вăтам феодалсем Мускав князĕсем аллине куçни, вĕсен влаçне йышăнни,—феодалсем çакăнтан хăйсем валли усă курма пултарнинчен килнĕ. Мускав княжествин составне кĕрсен феодалсем тĕрлĕрен льготăсем илнĕ, тата, кирлĕ пулсан, пулăшу илессе те шанса тăнă. Çак боярсем Мускав князĕсем патне куçнă хыççăн Мускав влаçне çирĕплетсе вăйлатма тăрăшнă, вĕсем хăйсен хуçисен пĕрлештерӳ политикине хастарлă пулăшса пынă.

Обществăллă ĕçлев çынсем хушшинче пайланса пыни тата производительнăй вăйсем ӳсни таварçаврăнăшĕпе суту-илĕве те чылаях аталантарнă. Алăстисен, вакă тата шултра сутăçсен шучĕпе хула халăхĕн йышĕ пĕрмаях ӳссе пыни пĕр центра пăхăнса тăракан вăйлă власть туса хурассишĕн тăракансен йышне те çултан çулах ӳстернĕ. Шултра феодалсем—князьсемпе боярсем усă курнă привилегисем (суту-илӳ пошлинисем, налогсем пухасси т. ыт.) хула халăхĕшĕн йывăр пулнă, çавăнпа вĕсем вырăнти феодалсене хирĕç кĕрешес ĕçре Мускав князĕсене пулăшма яланах хатĕр тăнă.

Иван Калита вилнĕ хыççăн, аслă князь пуласси унăн аслă ывăлĕ Семен Гордый (1341—1353 çç.) аллине куçнă. Гордый тесе ăна ытти князьсем çине мăнкăмăллăн пăхнă пирки каланă. Кайран, Семен вилсен, аслă князь пуласси Калитан тепĕр ывăлĕ—Иван Красный (1353—1359 çç.). аллине куçнă. Семен Гордый ĕнтĕ Владимир е Мускав аслă князĕ кăна мар, „пĕтĕм Руçăн“ аслă князĕ пулса тăнă.

Иван Красный хыççăн аслă князь унăн ывăлĕ Димитрий Иванович (1359—1389 çç.) пулнă, Димитрий Иванович вăхăтĕнче Мускав княжестви хăйĕн территорине чылаях сарнă.

Хăйĕн аслашшĕ пулнă Иван Калита политикине тытса пырса Димитрий Иванович Мускав княжестви çумĕнчи вырăс çĕрĕсене е сутăн е вăрçăпа туртса илнĕ, хăйĕн влаçне вырăс мар халăхсене те: коми-зырянсене тата коми-пермяксене пăхăнтарнă. Çак халăхсем хушшине христианство сарма янă епископ Стефан чиркӳ вĕрентӳне сарнипе пĕрлех тата халăхсем çине Мускав князĕн влаçне те сарнă.

Димитрий Иванович князь пулнă вăхăтра Мускав çумне Верея, Мещера, Калуга, Дмитров, Владимир пĕрлешнĕ.

Мускав чи пуян хула пулса тăнă. Суту-илӳ тĕлĕшĕнчен вăл Аслă Новгородпа тата тутарсен столиципе—Сарайпа ăмăртнă.

1366—1367 çулсенче Кремĕле чул стенасемпе купаласа çавăрни Мускавшăн оборона тĕлĕшĕнчен çеç мар тата политика тĕлĕшĕнчен те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Ку факт Мускав княжествин хăвачĕ ӳссе пыни çинчен каланă. Çак вăя палăртса летописец çапла çырса хунă: „Князь Димитрий Иванович Мускав хулине чулпа купалать, ăна вăл пĕр чарăнмасăр тăвать; вăл пур князьсене те хăй влаçне пăхăнтарса пырать, ун ирĕкне пăхăнманнисене вăйпа хăй енне çавăрма пуçлать».

# Князь Димитрий Иванович Донской тата Ылттăн Орда

Ылттăн Ордара пуçпулса тăракансем, хăйсем пулăшса пынă Мускав княжестви пысăк вăй пулса тăнине курсан, хыттăнах пăшăрханма пуçланă. Мускав княжествин хуçалăх, политика тата çар хăвачĕ вăйланнипе пĕрлех, феодалсен çĕрĕсем пĕрмай вакланса пынă. Кун пирки Ылттăн Орда вăйсăрланнă. Халĕ хансем енчен Мускав княжествине пулăшасси çинчен нимĕнле сăмах та пулма пултарайман. Çакăнтан пăртак маларах, Мускавăн пирвайхи князĕсем вăхăтĕнче, Узбек хан, Узбек хан хыççăн унăн ывăлĕ Джанибек (Чанибек) Мускава уççăнах пулăшса пынă пулсан, вĕсен хыççăнхи хансем вара пур майсемпе те Мускав малалла аталанса пырассине чарса лартма, ăна вăйсăрлатма, унăн хăватне пĕтерме тăрăшнă.

„XVIII-мĕш ĕмĕрти секретлă дипломати“ ятлă статьяра Маркс çапла калать: „Вырăс князĕсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе ярасси, вĕсем хушшинчи килĕшÿсĕрлĕхе пулăшса пырасси, вĕсен вăйĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарасси тата вĕсенчен никама та вăйланма парас марри—çаксем пурте вĕсем тутарсен традициллĕ политики пулнă“ тет.

Ылттăн Ордари шалти кĕрешÿ хан влаçне питех те вăйсăрлатса хăварнă, чее политикăна чылай аркантарнă. Çакна каласан та çителĕклĕ: вунă çул хушшинче Ылттăн Ордара вунпилĕк хан улшăннă, вĕсем, тĕрĕссипе каласан, тулли влаçлă пуçлăхсем пулман, пĕр-пĕринпе кĕрешсе пурăнакан феодалсен ушкăнĕсем вăхăтлăха лартнă çынсем çеç пулнă. Хан влаçĕ хăйĕн малтанхи хисепне çухатнă.

Князь Иван Иванович (Иван Красный) вилнĕ вăхăтра унăн ывăлĕ Димитрий сакăр çулта çеç пулнă. Мускав соперникĕсенчен пĕри—Суздаль князĕ Димитрий Константиновичпа Ылттăн Орда пуçлăхĕсем Мускава пырса çапма лайăх вăхăт çитнĕ, тесе шутланă. Пачах никам кĕтмен çĕртен Неврус хан аслă князь пулма Суздаль

князьне—Димитрий Константиновича ярлык панă, вăл вара ярлыка илсенех Владимира куçнă. Анчах та Суздаль князĕн савăнасси нумая пыман, вăл хăйĕн кăмăлне пурĕ те темиçе кун хушши кăна савăнтарнă. Димитрий Константиновичпа çакăн пек ĕç тунă хыççăн часах Неврус хана Заяицкри Хидырь хан вĕлернĕ. Хидырь хана хăйне те, Ылттăн Орда пуçлăхĕн рольне кĕрсе çитичченех, вĕлернĕ. Ылттăн Орда икĕ пая уйăрăлса кайнă, вĕсенчен пĕринче Мюрид хан пуçпулпа тăнă. Тепĕр пайĕн (Атăл лешьенĕ) ханĕ пулма Абдула лартнă,—чăннипе влаçа унăн ячĕпе вăйлă çарпуçлăхĕ Мамай тытса тăнă.

Пуçпулса тăрас вырăна хăйсен аллинче сыхласа хăварас шутпа Мускав боярĕсем, вăл вăхăтри государствăн паллă деятелĕсенчен пĕри—митрополит Алексей ертсе пынипе, Димитрий Константиновича хирĕç тăма шут тытнă. Мюридран вĕсем хăйсен çамрăк князĕ валли—Димитрий Иванович валли аслă князь пулма ярлык илнĕ. Часах тата çакă та паллă пулса тăнă: Ылттăн Ордан Атăл лешъенчи пайне тытса тăракан Мамай Мюридран чылай вăйлă пулни палăрнă. Çавăн пирки те Мускав боярĕсем 1362 çулта иккĕмĕш хут ярлык илнĕ, анчах Мюридран мар, Мамайран. Мускав Мамайран ярлык илнине пĕлсен Мюрид çавăнтах Суздаль князĕ патне ярлык янă. Дмитрий Константинович ярлык илнĕ те каллех Владимира куçнă, анчах та унăн тепĕр вуникĕ кунтанах хăйне хирĕç Мускав янă çарсенчен хăраса Владимиртан тухса тарса Суздале питĕрĕнсе лармалла пулнă. Кунта ăна Мускав çыннисем хупăрласа илнĕ. Унăн ирĕксĕрех Мускава парăнса пăхăнмалла пулнă. Çапла ĕнтĕ, Мускавпа Суздаль хушшинче пуçланнă кĕрешӳ икĕ енĕ те килĕшнипе пĕтнĕ. Димитрий Константинович Суздальпа Мускавăн вăйĕ хăйĕн вăйĕнчен ытларах пулнине ăнланса, 1365 çулта Ылттăн Ордаран ун патне аслă князь ярса панă ярлыка йышăнман. Тепĕр çулĕнче, 1366 çулта, Суздальпа Мускав хушшинчи килĕшĕве вунпилĕк çулти Димитрий Ивановича Димитрий Константинович хĕрĕпе мăшăрлантарса çирĕплетнĕ.

Мускавăн тепĕр вăйлăрах тăшманĕ Тверь князĕ Михаил Александрович пулнă, вăл Литва князĕпе Ольгердпа пит çывăх тăнă, тăванлă пулнă. Михаилпа Ольгерд хушшинчи çыхăнăва вĕсем иккĕш те Мускава вăйсăрлатма пĕр пекех тăрăшни, унăн «пĕрлештерӳллĕ» политикине пĕтерсе лартма тăрăшни çирĕплетнĕ. Литва князĕсен влаçĕнче вăл вăхăтра вырăс облаçĕсем пит нумай пулнă, Ольгерд вара вырăссен ытти çĕрĕсене те хăйĕн аллине илме ĕмĕтленнĕ. Нимрен ытла ăна Новгородпа Пскова туртса илес шухăш илĕртсе тăнă. Шăпах та çак сăлтава пула ĕнтĕ Ольгерд Тверь Мускава хирĕç тухнă похода активлăн хутшăннă. Вăл Мускав çĕрĕсем çине хăйĕн çарĕсене пĕрре кăна мар янă. Вăл икĕ хутчен, Тверь князĕ ыйтнипе, Мускав патне пырса ăна хупăрласа илнĕ. Литва князĕсен ют çĕрсене туртса илес шухăшĕсене пурнăçа кĕртесси, çакăн пек пысăк вырăс халăхне пĕрлештерекен центр пулса тăнă Мускав пур чухне ниепле те пулма пултарайман. Ольгерд Мускав патне яланах сасартăк пырса тухнă пулин те, вăл Мускава илме пултарайман: юмантан тунă кивĕ стенасем вырăнне халь кăна (1367 ç.) чулран тунă çӳллĕ стенасемпе купаласа çавăрнă, чи лайăх полксем сыхласа тăракан Мускав патне пыма май пулман. Литва князĕн кашнинчех Мускав çывăхĕнче пурăнакан халăхсене çаратса, ялсене çунтарса, Мускавран каялла чакса Литвана таврăнмалла пулнă.

Мускав çине иккĕмĕш хут поход тунă хыççăн (1370 ç.) Ольгердăн Димитрий Ивановичпа вăхăтлăха мир тумалла пулнă.

Ольгерд пулăшăвĕсĕр юлнă Тверь князĕ Михаил Александрович Ылттăн Ордаран пулăшу ыйтнă, унтан ăна пысăк пулăшу панă. Аслă князь пулма ханран ярлык çăмăллăнах илнĕ пулин те, вăл унпа усă курма пултарайман, мĕншĕн тесен унăн çителĕклĕ вăй пулман. Мускав князĕ унтан чылай вăйлăрах пулнине пĕлсе, Ылттăн Орда ăна хăйĕн çарĕсемпе пулăшу пама пулнă, анчах Михаил Александровичăн ку сĕнĕве ирĕксĕрех йышăнмалла мар

пулнă, вăл хăйне хирĕç пĕтĕм халăха тăратасран хăранă, мĕншĕн тесен вăл час-часах Литва çарĕсене иле-иле килнипе ахаль те пĕтĕм çурçĕр-хĕвелтухăç çĕрĕсенчи князьсене пит кӳрентерсе çитерне пулнă.

Ылттăн Ордаран вăл хан посолĕпе Сарыходжапа килнĕ. Ярлык илни тата унпа пĕрле юри янă Ылттăн Орда посолĕ килни Мускава пăхăнтарма ытлашшипех çителĕклĕ тесе шаннă вăл.

Анчах та событисем малалла аталанни хан указĕсене ним хирĕçмесĕр пăхăнас вăхăтсем иртсе кайнине кăтартнă. Тверь князĕ çине тăрсах аслă князь пулма хăтланнине пĕлсен, Димитрий Иванович, хан ярлыкĕ Владимир хулинчи тата ытти хуласенчи çынсене Михаил Александровича аслă князь вырăнне хурса пăхăнма хушнине пăхмасăрах, пурне те присяга ,партарнă, хăйне тĕрĕс пăхăнса пурăнма хушнă. Михаил Александровичпа Сарыходжа Владимира савăнăçлăн пырса çитсен, унти çынсем, Димитрий Ивановича панă обязательствăна пăхăнса, вĕсене йышăнман. Тарăхнипе хан посолĕ Димитрий Ивановича хăйне хăвăрт Владимира килме хушнă. Анчах Димитрий çак ыйтăва хирĕç, тӳлекĕн те тивĕçлĕн, хăйĕн вăйĕсене шанса, çапла ответ панă: „Ярлык патне каймастăп, Михаила Владимир князĕ пулма ямастăп, сана, патша посолне, çул уçă". Çакăнпа пĕрлех вăл Сарыходжа патне пуян парнесем янă, Мускава пыма чĕннĕ. Кăшт иккĕленсе тăркаланă хыççăн Сарыходжа парнене те, пыма чĕннине те йышăннă. Çакăншăн тарăхнипе Михаил Александрович Мускав княжествин темиçе хулине аркатса тăкнă та Тверь хулине таврăннă, кунтан вăл Димитрий Ивановичпа Сарыходжа çинчен жалоба çырса Ылттăн Ордана хăйĕн ывăлне янă. Димитрий Иванович та, нумай парне парса тултарнă Сарыходжа канашĕ тăрăх, Ылттăн Ордана кайнă. Ханпа унăн мурзисем валли илсе килнĕ пит нумай парне ыйтăва Мускав майлă татса панă. Димитрий Иванович аслă князь пулма ярлык илнĕ кăна мар, тата хырçă виçине те чылаях чакарттарнă. Ку Мускавăн пысăк çĕн-

терĕвĕ пулнă. Ылттăн Ордаран кайнă чух Димитрий Иванович, Тверь князне хăйне пăхăнтарас шутпа, хана вунă пин тенкĕ тӳлесе Тверь князĕн ывăлне илсе тавăраннă. Çакăн пек ăнăçсăрлăх курсан, Михаил Александрович каллех Литваран пулăшу ыйтнă. Нумай тăрăшнă хыççăн вăл Литва çарĕсене илсе килнĕ-килнех. Вĕсене Мускав сывăхне ярас мар тесе Мускав çарĕсем хирĕç тухнă, Литван хуралра пыракан полкне çĕмĕрсе тăкнă. Калуга сывăхĕнче икĕ çарĕ те тарăн та чăнкă сыранăн икĕ хĕррине вырнаçнă. Анчах вĕсем хушшинче çапăçу пулман, мĕншĕн тесен Димитрий Ивановичпа Ольгерд мирлĕ договор тунă: Мускав Михаил Александровича Тверьте кансĕрлемелле мар тума йышăннă, Литва çак условисем тăрăх Тверь князьне малалла пулăшу парассине пăрахăçа кăларма килĕшнĕ.

Михаил Александрович хăйне кӳрентерсе хăварнă тесе шутланă, вăл Мускав савăннипе килĕшме пултарайман. Çавăнпа та вăл тата тепĕр хут Ылттăн Ордаран ярлык ярса пама, çарсемпе пулăшма ыйтнă. Ылттăн Ордара вăл ыйтнисенчен хăшне-пĕрне йышăннă—хан ятарласа янă посол Михаил ыйтнă ярлыка илсе килнĕ. Ылттăн Ордан çак пулăшăвĕпе çунатланса, çавăнпа пĕрлех тутарсемпе Литва çарĕсем пулăшасса шанса хыпаланчăк, чăтăмсăр Михаил Александрович 1375 çулта Димитрий Иванович çине вăрçăпа тухасси çинчен пĕлтернĕ. Анчах та унăн шухăшĕпе шанчăкĕсем пурнăçа кĕреймен, çар тĕлĕшпе вăл мĕнле те пулсан пысăкрах пулăшăва тутарсенчен те, литовецсенчен те илеймен.

Димитрий Иванович, Мускав полкисене пухса, Тверь çине кайнă. Мускав çарĕ çумне Новгород сыннисем тата вунтăхăр князь çарĕсем хутшăннă. Çак пĕрлешӳллĕ вăйсен пуçне тăрса Димитрий Иванович Тверь хулине хупăрласа илнĕ. Çапăçу мĕнпе пĕтесси малтанах паллă пулнă: вăл Димитрий Иванович аллинче хĕçпăшаллă вăй ытларах пулнинчен кăна килмен, Ылттăн Ордапа килĕшнĕшĕн Михаил Александровича хирĕç пĕтĕм халăх тарăхнинчен

те килнĕ. Твере пулăшма тухнă литовецсем Мускав çарĕсем нумай йышлине пĕлсен, каялла тарнă. Михаил Александрович малалла кĕрешесси шанчăксăррине ăнланнă та Димитрий Ивановичран мир тума ыйтнă. Çак мир тăрăх тунă килĕшӳ Мускавăн чи вăйлă тăшманне Мускава пăхăнса тăракан вăй туса хунă.

Çав килĕшӳ тăрăх Михаил Александрович, хăйĕншĕн те, ачисемшĕн те, хăйне Дмитрий Ивановичăн кĕçĕн шăлнĕ тесе шутлама, вăрçăсене унпа пĕрле кайма, хăй пĕччен те, тутарсем урлă та урăх Мускава тытса илесси çинчен, аслă князь пуласси çинчен шухăш тытассине пăрахма пулнă.

Ылттăн Ордан вырăс князĕсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе ярас политикине шута илсе, çак килĕшӳ Тверь князьне Ылттăн Ордапа кирек-мĕнле килĕшӳ тума та чарнă, Ылттăн Орда аслă князь титулне парас пулсан та, Тверь князĕн ярлыка йышăнмалла мар пулнă. Малтан Твере пăхăнса тăракан çĕрсен составне кĕнĕ Кашин княжествине хăйне ирĕклĕ тесе йышăннă, анчах. тĕрĕссипе, вăл Мускава пăхăнса тăма пуçланă. Юлашкинчен килĕшĕвĕн чи кирлĕ условийĕсенчен пĕри çакă пулнă: Мускав аслă князĕ Димитрий Иванович тутарсене хирĕç похода тухсан, Тверь князĕ те вĕсене хирĕç хăйĕн çарĕсемпе тухма пулса обязательство панă. Вырăссен ăшра усраннă шухăшĕ,—ун çинчен ĕлĕк уççăн калама хăйайман, кирлĕ чух юптарулла сăмахсемпе асăрхаттарнă,—халĕ уççăн та татăклăн договорăн пĕр тĕп пункчĕ пулса тăнă. Семен Гордый вилес умĕн хăйĕн ачисене пиллесе хăварнă сырăвĕнче вĕсене килĕшӳллĕн, хархашусăр пурăнма хушнă. Вăл килĕшӳллĕ пурăнни, пĕр шухăшлă пулни ютçĕршыв çыннисем пуçпулса тăрассине сирпĕтсе антарма кирлине каласшăн пулса, хăй шухăшне тӳрĕ калама хăяйман пирки, çак сăмахсемпе кăтартса панă: „Çак сăмаха сире, пирĕн çурта ан сӳнтĕр тесе çыратăп" тенĕ.

Ку çурта сӳнме мар, Димитрий Иванович вăхăтĕнче çап-çутă çунма пуçланă. Вăл договорăн çак пунктĕнче

паларнă: „тутарсем пирĕн çине е сирĕн çине тапăнас пулсан, пирĕн те, санăн та вĕсене хирĕç çапăçмалла; е эпир вĕсем çине кайсан санăн та пирĕнпе пĕрле вĕсем çине каймалла“. Çапла ĕнтĕ, договор тутарсем тапăнасмĕн пулсан тутарсене хирĕç пĕрле отпор парассине çеç кăтартмасть, тутарсене хирĕç активлăн тухма май пуррине те кăтартать. Вăя тата ӳсекен хăватлăха ăнланни, Мускава, хăй Ылттăн Ордапа вăрçă тĕлĕшĕнчен тытăçма хатĕрленни çинчен, тӳрĕ те уççăн калама май панă.

Мускав Твере чаплăн çĕнтерни тата вĕсем хушшинче тунă килĕшĕвĕн условийĕсем, ку таранччен Твере хӳтĕлесе пынă çынсене хытă тарăхтарса янă, вĕсем çак событисем малалла та аталанса пырасран шикленме пуçланă.

Литва князĕ Ольгерд, тӳрех Мускава хирĕç тухма хăяймасăр, Смоленск княжестви çине тапăннă. Димитрий Иванович Тверь çине походпа кайнă чух ăна Смоленск князĕ пулăшнă. Çакăн пирки аркатса тăкнă та ĕнтĕ Ольгерд Смоленск княжествине. Литва çакăнтан малалла каймалла хăранă. 1377 çулта, Ольгерд вилсен, Литва князĕсем хушшинче кĕрешӳ вăйланса кайнă, вара Ольгердăн икĕ ывăлĕ—Андрейпа Димитрий хăйсен ирĕкĕпех Мускав князĕн службине куçнă.

Ылттăн Орда кăмăлсăр пулнинчен килекен ĕçсем чылай йывăртарах пулнă. Хан ячĕпе пуçпулса тăнă Мамай халĕ хăй хан пулса тăнă. Ăслă тата инçетрине курма пултаракан политик, вăл Мускав ытлашши вăйланса, ӳссе кайни тутарсем вырăс çĕрĕнче малалла пуçпулса тăрассине пĕтерсе хума пултарнине ăнланнă. Димитрий Иванович Орда панă распоряженисене кĕретĕнех ним вырăнне хуманни, вăл Тверь князĕ аслă князь пулма хан панă правана йышăнманни Мамайпа унăн мурзисене хытă тарăхтарнă. Ку Ылттăн Ордашăн халиччен илтмен чăрсăрлăх пулнă. Тутар чиновникĕсем, çарпуçлăхĕсем, правителĕсем ку таранччен вырăс князĕсем хăйсене пăхăнса тăрассине, сăмах хирĕçмесĕр хан ирĕкне пурнăçа кĕртессине курма, пуян парнесем илме кăна хăнăхнă. Нумаях та пулмасть Димитрий Ивано-

вич хăй, аслă князь пулассине Тверь князьне парас мар тесе, Ылттăн Ордана килсе хан аллинчен ярлык илнине вĕсем пурте астунă.

Чи малтан Мамай Мускава пăхăнса тăракан князьсене, Тверь çине походпа кайнă чух вĕсем те хутшăннăшăн, Мускав пуçпулса тăнине йышăннăшăн, хаяррăн айăпласа шутланă. Тутарсен пысăк отрячĕсене, Мамай хушнă тăрăх, Чулхулапа Новосильск çĕрĕсене янă. Халăха çаратса, хĕнесе, хуласене çаратса тата ялсене çунтарса çӳренĕ чухне тутар воинĕсем „Мĕншĕн Тверьпа вăрçрăр!“ тесе кăшкăрнă. Вĕсем тапăннин карательнăй характерĕ питех те паллă пулнă. Кашин княжестви Тверьтан уйăрălса кайнине пĕлсен, вĕсем унта çĕмĕрсе кĕрсе Кашин хулине çунтарса янă, кайран нумай çынна тыткăна илсе тухса кайнă.

Ылттăн Орда çак карательнăй экспедицисемпе чарăнса тăрас çукки паллă пулнă.

Мускав çĕрĕ çине тутар çарĕсем сасартăк тапăнасран сыхланса, Димитрий Иванович чылай çар пухнă та вĕсемпе Ока хыçне тухнă. Шикленни иртерех пулнă. Тутарсем килни-туни пулман. Икĕ çул лăпкăн иртнĕ.

1377 çулта тутарсем, халиччен паллă пулман царевич Арапши ертсе пынипе, каллех Чулхула çĕрĕсем çине тапăннă. Кĕтмен çĕртен килсе тухнă тăшман Чулхула çарне тата ăна пулăшма пынă Мускав полкисене Пьян шывĕ çинче çĕмĕрсе тăкнă. Чулхулана тутарсем туртса илнĕ те çаратса хăварнă.

Çак çĕнтерӳ тутарсен çарпуçлăхĕсене хастарлантарса янă, вара тепĕр çулĕнче, 1378 çулта, тутарсен икĕ вăйлă отрядне Мамай вырăс çĕрĕсем çине янă. Вĕсенчен пĕри Чулхула çине тапăннă, тепри, Бегич ертсе пынипе, Мускав çине кайнă. Тутарсем çывхарса килнине пĕлсен Димитрий Иванович тӳрех вĕсене хирĕç тухнă, вара вăл тутарсемпе Рязань княжестви территорийĕнче, Ока çине сылтăм енчен юхса кĕрекен Вожа юханшывĕ хĕрринче тытăçнă.

Вожа шывĕ урлă каçсан, туттарсем хытă кăшкăрса Мускав çарĕсем çине тапăннă, Мускав çарĕсем вĕсене виçĕ енчен вăйлăн контратака туса ответленĕ. Варринче Димитрий Иванович хăй ертсе пынă, флангсенче Пронкнязĕ Даниил тата Мускав окольничийĕ Тимофей пулнă. Тутарсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă, вĕсем хăраса ӳксе Вожа лешъенне тарнă,—юханшыв урлă каçнă чухне пĕр-пĕрне хĕстернĕ пирки тутар юланутçисем нумайĕшĕ шыва путнă. Çĕрле пулни тата вăйлă тĕтре тăни çавăнтах тутарсене хыçалтан хăваласа пырассине организацилеме май паман. Тепĕр кунне кăнтăрла çеç Мускав çарĕсем малалла кайнă та çеçенхирте тăшманăн пĕтĕм обозне илнĕ. Çак поражение тӳснĕшĕн тарăхнипе Мамай Рязань çĕрĕ çине тапăннă, тутар çарĕсем çак княжество территоринче поражени курнă тесе, ăна пĕтĕмпех çаратса хăварнă. Тапăннинчен хăраса ӳксе, Рязань князĕ Олег Иванович, Ордана тухса кайса хана хăй парăнни çинчен пĕлтернĕ.

Вожа çинче тутарсем поражени курни вырăс çарĕсен пирвайхи пысăк çĕнтерĕвĕ пулнă. Çак çĕнтерӳ Мускав полкисем çапăçăва лайăх хатĕрленнине, çавăнпа пĕрлех халиччен çĕнме май пулман тутар çарĕсем те поражени тӳсме пултарнине кăтартса панă. Вырăс халăхĕ пĕрлешме пуçлани, паллах, Мускав çарĕсен кăмăлĕнче те палăрнă. Вĕсем ĕнтĕ текех уйрăм, вырăнти интереспа пурăнакан, час-часах пĕр-пĕринпе вăрçакан, ăнсăртран çеç пĕр çĕре пухнă удел княжествисен полкисем пулман.

Пĕр командованине пĕрлештернĕ Мускав çарĕ хăйне халĕ пĕтĕм вырăс çĕрĕсен интересне сыхласа тăракан пĕрпĕтĕм çар вырăнне шутланă; Димитрий Иванович йăхран йăха куçакан тысяцки должноçне пĕтерсе командованине хăй аллине илнĕ.

Мускав çарĕсем Вожа юханшывĕ çинче тăшмана парăнтарни (вăл кăмăлсене çĕкленĕ пулин те), Ылттăн Ордапа Мускав хушшинче уççăн пуçланнă кĕрешӳ пуçламăшĕ çеç пулнă-ха. Çакна Димитрий Иванович та, ăна

пулăшса тăракан князьсем те, Мускаври боярство та ăнланнă. Мускав çине тутарсен пĕтĕм вăйĕсем тапăнассине кĕтсех тăмалла пулнă. Çавăнпа та вĕсене хирĕç тăма хăвăрт хатĕрленме кирли пуриншĕн те паллă пулнă.

1380 çулти çу пуçламăшĕнче Мамай похода хатĕрленни çинчен Мускава сăмах çитнĕ. Çак сăмахсене çирĕплетсе Рязань князĕ Олег Иванович янă хыпарçă: Мамай пысăк çарпа Дон патне çывхарса килни çинчен, вăл Воронеж юханшывĕ юхса кĕнĕ çĕре вырнаçса тăни çинчен пĕлтернĕ. Димитрий Иванович, Ылттăн Ордапа тытăçма тахçанах хатĕрленнĕскер, тутар çарĕсем килни çинчен сведени ялсенех, хăй енче тăракан пур князьсем, облаçсемпе княжествăсем патне хыпарçăсем янă. Юри янă хыпарçăсем хуласемпе ялсенче хытă сасăпа Мамайпа вăрçă пуçланни çинчен пĕлтернĕ, князьĕен грамотисене вуласа панă.

Пуринчен малтан Мускава Димитрий Иванович пичĕшĕн ачи Серпухов князĕ Владимир Андреевич пырса çитнĕ. Шăпах çав вăхăтра Рязань князĕ Олег сутăнни çинчен Мускава пĕлтерӳ çитнĕ. Хăйĕншĕн çеç тăрăшакан Олег Литва князĕпе Ягайлопа тата Мамайпа, иккĕшин патне те юриех посолсем ярса, вăрттăн калаçусем тума тытăннă. Олег Ягайлона Мамай похочĕ çинчен пĕлтернĕ, ăна тутарсем çумне хутшăнма сĕннĕ, вара кайран, вĕсем çĕнтерсен, Мускав çĕрĕсене Рязаньпе Литва хушшинче валеçсе илме пулнă. Мамай патне янă çырура вăл Мускав князне хăйĕн такçанхи тăшманĕ вырăнне хурса ятлаçнă, Ылттăн Ордана пĕтĕмĕшпех пăхăнни çинчен пĕлтернĕ, тутар çарĕсене хирĕç Димитрий Иванович вăрçма хăяймĕ, ăçта та пулсан тарса пытанма тăрăшĕ, тесе Мамая ĕнентернĕ.

«Господин, эсĕ сана пăхăнса тăракан Мускав князĕ Димитрий çине килесшĕн, ăна хăратасшăн тенине эпĕ илтрĕм; халĕ, çутă патша, ылттăн вăхăтпа нумай пуянлăхсен вăхăчĕ çитрĕ. Князь Димитрий, сан ятна илтсенех, инçе çĕре—е Аслă Новгорода, е Двина çине тарать, Мускав

пуянлăхĕ сан алăра пулать: мана, Рязань Олегне, санăн чуруна, хăвăн ырлăхна кӳр"[1],—тесе çырнă Олег Мамай патне.

Олег сутăнни çинчен пĕлнипе пĕр вăхăтрах, Димитрий Иванович, Мамай Литва князĕпе союз туни çинчен те пĕлнĕ. Çак хыпарсем Мускава хумхантарнă, анчах вĕсем Димитрий Иванович тата ăна çывăх боярсемпе князьсен шухăшне улăштарма пултарайман. Владимир Андреевичпа канашласа пăхсан вăл, çарсем ярассине хăвăртлатма ыйтса иккĕмĕш хут пур çĕрсене те хыпарçăсем салатнă.

Мускава пăхăнакан хăшпĕр князьсем Мускава пуçтарăнсан, Димитрий Иванович татăклă решени йышăнас умĕн çар совечĕ пухнă. Тăшмана пурте курайман, пурте ирсĕр пусмăра хăвăртрах хăйсен çурăмĕ çинчен шăлса ывăтасшăн пулнă. Çавăнпа та çар совечĕ часах пĕршухăшлă решени патне пырса тухнă. Çар совечĕ Мамая Литва князĕпе пĕрлешме парас мар, ана Мускав патне ярас мар, тесе решени йышăннă. Рязань князĕ Олег йăнăшнă. Димитрий Иванович Новгорода тарма мар, хăй Мамай çарĕсене хирĕç кайнă. Семен Гордый кăтартса панă çурта çутă çулăмпа çунма пуçланă. Димитрий Иванович хăйĕн князĕсене çарсем яма чĕнсе калани пур княжествăсемпе çĕрсенче те нумай кĕтсе пурăннă савăнăçлă хыпар пек хăвăрт саланнă. Пусмăрçăсене, тутар ханĕсемпе мурзисене хирĕç чĕререн курайман пĕтĕм халăх çĕкленнĕ. Мускава пăхăнса тăракан князьсен çарĕсемпе пĕрле Мускава,—ăна малтан çарсем пухăнмалли пункт тунă пулнă,—пĕр татти-сыпписĕр хăйсен ирĕкĕпе организациленнĕ нумай йышлă дружинăсем килсе тăнă. Пĕтĕм халăх йывăр пусмăр айĕнче ывăнса, йăлăхса çитнĕ, çавăнпа та вăл тăшмана хирĕç пĕр çын пек пулса çĕкленнĕ. Мĕншĕн тата кампа çапăçмаллине пурте ăнланнă.

Куликово хирĕнчи çапăçу çинчен калакан авалхи «Задонщина» ятлă калав Мамая хирĕç похода мĕнле хатĕр-

---

[1] Н. Костомаров. Исторические монографии и исследования, стр. 528, изд. 1903.

ленни çинчен çапла калать: «Мускавра лашасем тулхăраççĕ, пĕтĕм вырăс çĕрĕ тăрăх чап янăрать, Коломнăра трубасем кăшкăраççĕ, Серпуховра барабансем çапаççĕ. Дунай хĕрринче ялавсем тăраççĕ, Новгородра вече чанĕ йыхăрать". Çак пĕтĕмĕшлĕ çĕкленӳпе хаваслăх пурне те çĕнтерӳ пуласса шантарнă.

Мамая хирĕç похода тухма йышăнсан, çарсене Коломнăна пухăнма хушнă. Тутар çарĕсем пыни çинчен сведенисем илсе тăрас тесе Дон патĕнчи çеçенхирсене юлан-утлă отряд янă, ун пуçлăхĕсем Родион Ржевский, Яков Усатый тата Василий Тупик пулнă. Çакăн хыççăн часах Ржевский янă пĕлтерӳре Мамай Ягайлопа пĕрлешме тухни çинчен каланă.

Мускав полкисем тата Мускава пухăннă çарсемпе дружинăсем 1380 çулти августăн 20-мĕшĕнче похода тухса кайнă. Похода тухса каяс умĕн Димитрий Иванович Владимир Андреевичпа пĕрле смотр тунă, вĕсем Девичье поле текен вырăна кăларса тăратнă пĕтĕм çара пăхса тухнă. Смотр хыççăн çар похода тапранса кайнă. Варгансем каланă, трубасем янтранă, шăхличсем шăхăрнă.

Коломнăна виçĕ колоннăпа пынă. Çул çинче çĕнĕрен те çĕнĕ çарсемпе дружинăсем пĕрлешнĕ. Августăн 24-мĕшĕнче Мускавран тухнă колоннăсем пурте Коломнăна пухăннă. Кунта вĕсем Мускава пăхăнакан князьсен çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Çарсем мĕнпур вырăс çĕрĕсенчен пухăннă. Кунта Белозерск князĕсем Федор Семеновичпа Семен Михайлович, Каргополь князĕ Глеб, Ярославль князĕ Андрей, Ростов князĕ Димитрий, Серпей князĕ Лев, Друцки князĕсем Димитрийпа Владимир, Елец, Мещерски, Муром, Устюг тата ытти князьсем пулнă.

Тутарсене хирĕç татăклă кĕрешĕве тухасси пĕтĕм халăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланса илни Мускав князĕ тавра пур князьсене те пĕтĕçтернĕ. Рязань, Тверь тата Новгород çыннисем çеç пулман. Вырăс çарĕсен пĕтĕм шучĕ çĕраллă пин çынна çитнĕ. Вырăс çарĕсем çакăн пек нумай йышлăн пухăнни халиччен нихăçан та пулман.

Вырăссен вăл вăхăтра, тутарсенни пекех, çарăн тĕп пайĕ — утлă çар пулнă. Çурран çара хуласене сыхлама тата оборона тума çеç тытнă, çавăнпа та вăл çителĕклĕ пулман. Пухăннă çарсен хĕçпăшалĕ пит те тĕрлĕрен пулнă, мĕншĕн тесен кашни хăйĕн пурлăхне кура хăй шучĕ çинчен хĕçпăшалланнă.

Сăнăран тата хĕçпе касасран сыхланас тесе воинсем вăл вăхăтра юри хатĕрленĕ тумтирсем тăхăннă. Кусем, чи малтан, пуçа тăхăнмалли хатĕрсем — пите, мăйпа хулпуççине витсе тăракан шĕвĕр вĕçлĕ тимĕр калпаксем (шишак). Шишак умĕнче, сăмса тĕлĕнче, çӳлтен аялалла пĕчĕк тимĕр питлĕх аннă, ăна вара «сăмса» тенĕ. Кĕлеткене сыхлама кольчугăсемпе усă курнă. Кольчуга вăл—тимĕртен тунă, чĕркуççи патне çитекен кĕпе. Унсăр пуçне, кăкăрпа çурăм тĕлне кольчуга çине тимĕр латсем — нагрудниксем тăхăннă. Çавăн пек латсене алăсемпе урасене те тăхăннă. Кашни юланутлă воинăн е тăваткăл, е çаврака щит пулнă. Щитсене пурне те хĕрлĕ тĕспе сăрланă. Юланутлă воинсем кĕске хĕçпе, кукăр саблĕсемпе, çĕçĕсемпе е кинжалсемпе, сăнăсемпе, сулицăсемпе (ывăтмалли кĕске сăнă), сăнăллă ухăсемпе, пуртăсемпе, бердышсемпе, палицăсемпе хĕçпăшалланнă. Çурран чух çапăçма кашни воинăн кистен пулнă—пиçиххи е сăнчăр: унăн пĕр вĕçĕнче алла тăхăнмалли петлĕ, тепĕр вĕçĕнче тимĕр чăмăр е чул пулнă.

## Куликово хирĕнчи çапăçу

Коломнăра Димитрий Иванович çарсене тата тепĕр хут пăхса тухнă та похода каймалли йĕрке туса панă. Димитрий Иванович хатĕрленнине илтсе пулмалла, Мамай Коломнăна посол янă: Узбек тата Джанибек хансем пулнă вăхăтра вырăссем Ылттăн Ордана мĕн чухлĕ хырçă тӳленĕ, Мамай та çавăн чухлĕ хырçă тӳлеме ыйтнă. Димитрий Иванович хырçă укçине сахалтарах тӳлеме килĕшнĕ, анчах Мамай сĕнĕвĕпе килĕшмен. Çарсем похода тухнă. Çул кăтартса пыма, çулсене тата тутарсем ăçта хĕл каçма чарăнса тăнине лайăх пĕлекен вунă купеца илнĕ. Рязань

çĕрĕсем урлă выртакан çул чи кĕске çул пулнă. Анчах Коломнăран çарсем çак çулпа кайман, кăшт аяккараххăн çавăрăнса, Ока шывĕн сулахай хĕрри тăрăх кайнă. Кăна юри, Рязань çарĕсемпе тытăçмалла ан пултăр, тесе тунă.

Лопасня юханшывĕ Окана юхса кĕнĕ çĕрте Димитрий Иванович пĕр кунлăх чарăнса тăнă. Кунта ун çарĕсем çумне Мускаври Вельяминов воевода хăйĕн çурран çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Ока тепĕр енне утлă çар каçсан, разведка тума мала юланутлă отряд янă, вăл отряд начальникĕ Семен Мелик пулнă. Вельяминов воеводăна çурран çарпа каçă сыхлама тата кая юлнисене кĕтсе илме тесе пĕр вăхăтлăха çавăнтах хăварнă. Дон патне кайнă чухне çул çинче ырăссем çумне хăйсен çарĕсемпе Литва князĕсем Андрейпа Димитрий Ольгердовичсем хутшăннă. Халĕ ĕнтĕ çул Рязань çĕрĕсем урлă пынă. Пур çарсене те халăха нимĕнпе те кӳрентермелле мар тесе приказ панă. Димитрий Иванович Рязань çарĕсем уншăн хăрушă маррине пĕлнĕ, анчах та хăйĕн çарĕсене ырăнсăр вăйсăрлатма парас мар тесе пур майсемпе те Рязань çарĕсемпе тытăçассинчен пăрăнма тăрăшнă.

Дон патне çывхарсан, Непрядва юхса кĕнĕ ырăнтан инçех мар, çурран çар килсе çитессе кĕтсе, Мускав çарĕ чарăнса тăнă. Тепĕр ик-виç кунтан Семен Мелик хурал полкин хыпарçисем: Мамай Дон хыçĕнче инçетре мар тăни çинчен пĕлтернĕ.

Мускав çарĕсен похочĕ çинчен Мамай нимĕн те пĕлмен, вăл Рязань князĕнчен Олегран тата Литва князĕнчен Ягайлоран пулăшу килессе кĕтсе, ерипен малалла пынă. Çав вăхăтра, ырăс çарĕн пур кая юлнă чаçĕсем те пырса çитнĕ.

Мускав çар начальникĕсем умне çакăн пек ыйту тухса тăнă: тутарсене кунта кĕтмелле-и, е Дон урлă каçмалла та вĕсене хирĕç малалла каймалла? Апла тунин те, капла тунин те хăйĕн ырă енĕпе усал енĕ пулнă. Дон урлă каçни пĕр-пĕр ăнăçсăрлăх килсе тухас-мĕн пулсан, каялла чакмалли çула питĕрет, çав енчен вăл хăрушă. Çавăнпа пĕрлех, Дон урлă каçса кайсан, Тутар вăйĕсем Литва çарĕ-



**Димитрий Донской Куликово хирне пăхса çаврăнать.**

*Щарлеман худ. картинĕнчен.*

пе пĕрлешессине вырăс çарĕсем пӳлсе хума пултарнă, капла туни паллах, ăнăçлăх пулас шанчăка чылаях ӳстерет. Димитрий Иванович пухнă советра шухăшсем икĕ майлă пулнă. Пысăках мар пайĕ тăшмансем пит те нумай — кунта тутарсем те, рязанецсем те, Литва та пур, тесе сыхланма сĕннĕ. „Хамăр алăра юханшыва хăварăпăр, — тенĕ сыхлануллă пулассишĕн тăракансем, — кайма йывăр пулать, пирĕн каялла каймалли çула тытса тăмалла".

Хăюллăрах, опытлăрах çынсем çак шухăша хирĕç пулнă.

„Вăйлă çапăçу пултăр тесен, паянах каçса кайма хуш, никамăн та каялла çаврăнасси çинчен шухăш ан пултăр; кашниех чеелĕхсĕр çапăçтăр, çăлăнăç çинчен ан шухăшлатăр, сехетрен сехете хăйне вилĕм кĕттĕр; вĕсен вăйĕсем пысăк теççĕ пулсан,—мĕн вара ун çине пăхмалла...»[1].

Советра Димитрий Иванович çапла каланă: „Юратнă туссемпе тăвансем! Пĕлĕр, эпĕ кунта Олегпа Ягайло çине пăхса тăма е Дона хураллама тесе килмен, вырăс çĕрне тыткăнран тата çаратусенчен хăтарас е Русьшăн хамăр пуçа хурас тесе килнĕ.

Тӳрĕ вилĕм намăс пурăнăçран лайăхрах. Тутарсене хирĕç тухса ним тумасăрах каялла таврăниччен, пачах тухманни аванрах пулĕччĕ.

*Паянах Дон лешъенне каятпăр, унта вара е çĕнтеретпĕр те пĕтĕм вырăс халăхне вилĕмрен çăлатпăр, е хамăр пуççене хамăр тăван çĕршывшăн хуратпăр*".

Советра нумайăшĕ Дон урлă каçассишĕн пулнă. Çак решени пĕтĕм халăхăн хаваслăхĕпе килĕшнĕ, вырăс çарĕсемпе çар пуçлăхĕсене çапăçу пуçарăвне хăйсен аллине илме май панă.

Çарсем — кĕперсем тума тата каçăсем валли вырăн шырама приказ илнĕ.

---

[1] Н. Костомаров. Исторические монографии и исследования, стр. 535, изд. 1903 г.

Шыв урлă каçнă чух Семен Мелик кĕтмен çĕртен хăй отрячĕпе пырса çитнĕ. Вăл тутарсен малти чаçĕсемпе çапăçни çинчен пĕлтернĕ. Çапла вара, вырăс çарĕсем килни çинчен Мамая паллă пулнă. Мелик пĕлтернĕ тăрăх, Ягайло киличчен вырăс çарĕсене шыв урлă каçма кансĕрлес тесе, Мамай хăвăрт малалла пынă. Чăнах та, сентябрĕн 8-мĕшĕнче çĕрле Димитрий Иванович çарĕсем Дон урлă каçнă чух, Мамай вĕсенчен 7 — 8 çухрăмра кăна канма чарăннă.

Вырăссемпе тутар çарĕсем Дон шывне Непрядва юхса кĕнĕ вырăнта хирĕç пулнă. Çакă вăл тĕмескеллĕ, çырмаçатраллă, шурлăхлă вырăн пулнă. Кунта Смолка, Курца, Нижний Дубик ятлă пĕчĕк шывсем юхса выртнă. Шурлăхсенче шыв чăххисем, куликсем пит нумай пурăннă. Унăн ячĕ те çакăнтанах Куликово хирĕ пулса тăнă. Юханшывсен чăнкă çыранĕсем тăрăх талкăшпех çăра вăрмансем ӳснĕ. Пит йышлă тарăн çырмасем те çавăн пекех çăра вăрмансемпе хупланса тăнă.

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче ирпе пĕтĕм вырăна вăйлă тĕтре хупласа илнĕ. Вырăс çарĕсем тĕтрепе пытанса çапăçу йĕркине тăнă, вырăн рельефне тата тутар çарĕсен тактикине шута илсе, лайăх позицисем йышăннă. Çарăн сылтăм енĕ — Нижний Дубик юханшывăн çырмаллă, вăрманлă хĕррисем патне, сулахай енĕ Смолка юханшывăн чăнкă çыранĕсем патне вырнаçнă. Çарсене çапла вырнаçтарса тăратнă пирки тутарсен çар пуçлăхĕсем хăйсен юратнă меслечĕпе — тăшмана пур енчен те çавăрса илессипе усă курма пултарайман.

Малта Димитрий тата Владимир Друцкий князьсем ертсе пынă малти полк тăнă, унта çурран çар ытларах пулнă. Унăн составне Вельяминовăн çурран çарĕ тата Семен Меликăн хурал отрячĕ кĕнĕ. Малти полк хыçĕнче Пысăк полк, унăн айкисенче сылтăм тата сулахай енчи полксем тăнă. Сылтăм енчи полка Андрей Ольгердович, сулахай енчине Белозерск князĕсем ертсе пынă. Пысăк полк пуçĕнче Мускав воеводи Тимофей Васильевич

Вельяминов тăнă. Пысăк полк хыçĕнче Димитрий Ольгердович ертсе пынă резерв полки тăнă.

Кусемсĕр пуçне сулахайри фланг хыçĕнче, çăра вăрманта, чи лайăх юланутçăсенчен суйласа илнĕ утлă çарăн пысăк отрядне пытарса тăратнă, ун начальникĕсем Владимир Андреевич тата воевода Димитрий Боброк пулнă.

Çарсене çапăçăва хатĕрлесе çитерсен, Димитрий Иванович вĕсене пăхса çаврăннă, тăван çĕршывшăн çирĕп тăма чĕнсе хаваслантарнă. Димитрий Иванович чĕнсе каланипе хавхаланса çапăçу пуçланассине тӳсеймесĕр кĕтсе тăракан воинсем пĕр сасăпа, хăватлăн, шанчăклăн, çапăçуллăн кăшкăрнă сасăсем кĕрлесе кайнă.

Вуннамĕш сехетре тĕтре саланнă.

Вырăс çарĕсен тумтирĕсемпе хĕçпăшалĕсем хĕвел çинче çуталса тăнă. Пур çĕрте те князьсемпе Мускав полкисен ялавĕсем вĕлкĕшнĕ. Вĕсем хушшинче аслă князĕн çӳлĕ ялавĕ уйрăмăн курăнса тăнă. Çапăçăва пурте хатĕр пулнă.

Вырăссен авалхи йăлипе, Димитрий Иванович çапăçу пуçланиччен малтан хăйĕн çинчен князь тумтирне хывса хăйĕн юратнă боярин Бренк çине тăхăнтарнă та, ăна хăйĕн лаши çине лартса аслă князь ялавĕ патне тăратнă, — çапла калать Куликово хирĕнчи çапăçу çинчен авалхи калав. Димитрий Иванович хăй воин тумтирĕ тăхăнса çапăçура пулма малти полкра вырăн йышăнса тăнă.

Вуниккĕмĕш сехетре Куликово хирĕн кăнтăр-хĕвеланăç енчен тутарсен çарĕсем курăннă, вĕсем хăйсен хисепĕпе вырăссенчен чылай ытларах пулнă. Мускав çине походпа кайма хатĕрленсе, Мамай хăйĕн вăйĕсене пысăклатма кирлисене пурне те тунă. Чи малтан вăл Рязань князĕпе — Олегпа тата Литва князĕпе — Ягайлопа союз тунă. Ылттăн Ордара мĕн май килнĕ таран мобилизацилесе пухнă çарсăр пуçне Мамайăн ютçĕршыв çыннисене: половецсене, яссене, армянсене, Крымри генуэзецсене т. ыт. те тара тытса пухнă çар та нумай пулнă. Куликово çапăçăвĕнче пулнă тутар çарĕсен хисепне тĕрĕс пĕлме

пит те йывăр, анчах кирек епле пулсан та, вĕсен йышĕ 250 пинрен пуçласа 300 пин çын таран, Димитрий Иванович вăйĕнчен икĕ хутран кая мар ытларах пулнă. Çӳлĕ Хĕрлĕ сăрт çинчен анакан тутарсем хуллен малалла пынă. Тутар çарĕн варринче тара кĕрĕшнĕ генуэзецсен çуран çарĕ пулнă. Икĕ айкипе утлă çар пынă.

Тутар воинĕсен хура тумтирĕсем, хура шлемĕсем тата щичĕсем Мамай çарĕсене хаяр сăн кĕртнĕ.

Юн тăкма тата вилĕме хирĕç пĕр-пĕринпе тĕл пулнă икĕ пысăк вăй çине пăхма та хăрушă пулнă, — тет авалхи калав.

Пĕр-пĕрин патне çывхарсан, тутарсемпе вырăссен çарĕсем чарăнса тăнă. Çапăçу умĕн, халăх сăмахĕсем тăрăх, вăл вăхăтри йăлапа кашни енчен пĕрер çын тухса çапăçнă. Тутарсем енчен Телебей паттăр, вырăс воинисем енчен — Пересвет монах тухнă. Вĕсем лашасене хытă чуптарса, сăннисене умма тытса пĕтĕм вăйран пĕр-пĕрин çине пырса çапăннă. Хытă çапăннипе лашисем çĕр çине хуçланса аннă, икĕ паттăрĕ те виллĕн ӳкнĕ.

Çавăнтах трубасен чĕнсе калакан хытă сасси тата çапăçуллă кăшкăрашусем çапăçу пуçланни çинчен пĕлтернĕ.

Тутарсем хăйсен тĕп вăйне вырăс çарĕсен варрине янă.

Малти полк, унта Димитрий Иванович та пулнă, тутарсен пирвайхи атакине хăй çине илнĕ. Чи лайăх çурран çар пĕр утăм та чакмасăр, тутарсене хирĕç паттăрăн çапăçнă.

„... Сăнăсем улăм пек хуçăлнă, ывăтмалли сăнăсем çăмăр çунă пек тăкăннă, тусан хĕвеле хупласа илнĕ, хĕçсем çиçĕм пек йăлтăртатнă, çынсем çава айĕнчи курăк пек ӳкнĕ. Юн шыв пек тăкăннă, пĕчĕк юханшыв пек юхнă...“

Анчах тутар çарĕсен йышĕ вырăс çарĕсен йышĕнчен темиçе хут нумайтарах пулнă. Часах вырăссен çурран çарĕ пĕтĕмĕшпех çав вырăнта пĕтнĕ. Малти паттăр полк

çапăçура хастаррăн пĕтнĕ хыççăн, тутар çарĕсем, флангсене çавăрса илме пултарайман пирки, мĕнпур вăйпа Пысăк полк çине тăрăннă. Çĕнĕрен алла-аллăн вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Юн пĕтĕм хир тăрăх юханшыв пек юхса, çĕре тарăн ислентернĕ. Çав тери тăвăр пулнă пирки боецсем сывлама пултарайман. Икĕ енчен те нумай воин лаша урисем айне пулса пĕтнĕ.

„Куликово хирĕнче çапăçакансем хĕçпăшалтан çеç мар, хăйсене хăйсем çапăнса, лашасен урисем айне пулса нумай вилнĕ тата тăвăр пирки сывлăшсăр антăхса пĕтнĕ", тет çак çапăçу çинчен каласа паракан калав.

Çапăçакансем хаяррăн кăшкăрни, хĕçпăшал пĕр-пĕрне перĕнсе янтрани, йыхăракан сигналсем — пурте пĕрлешсе хăлхана çурас пек кĕрлесе тăнă. Виле нумай пирки лашасем аран-аран уткаланă. Çав тери тăвăр пирки çапăçакансем тăшмана сулахай алăпа тытса сылтăм алăпа чикнĕ е çапнă.

Тутар çарĕсем, тĕп линине çĕмĕрсе тухса, аслă князь ялавĕ патне çитсе ăна касса пăрахнă. Бренк боярина вĕлернĕ. Кăшт вăхăт иртсен, резервра тăракан Брянск, Владимир тата Суздаль дружинисем çапăçма пуçланă, вара тутарсен чакмалла пулнă. Вĕсем тутарсем вырăс çарĕнваррине тапăннине çапса хуçнă. Вырăссем каллех çапăçăвăн тĕп лининче йĕркене кĕрсе çитнĕ. Кунта поражени тўссен, тутарсем талкăшпех сулахай фланг хыçне кайнă. Сулахай енчи полка вăйлăн хĕсме тытăннă. Унăн начальникĕсем пулнă Белозерск князĕсене тискеррĕн вĕлернĕ. Полк хăвăрттăн Непрядва патне каялла чакма пуçланă. Çĕнтерў хăйсем енче пуласса шанса, уçăлнă вырăна çĕмĕрсе кĕрсе кĕç-вĕç вырăс çарĕсен тылне тухма шутласа, тутарсем хыттăн кăшкăрса каялла чакакан полка хăваланă. Хыçалта (засадăра) тăракан утлă çар отрячĕ çапăçăва кĕресшĕн тўсеймесĕр тăнă. Анчах опытла воевода Боброк васкаман, вăл майлă вăхăт килсе тухасса кĕтсе, хăйĕн çарне чарса тăнă. Кăнтăрла иртсе виçĕ сехет тĕлĕнче, тутарсем сулахай енчи полка хăваласа пырса засадă-




**Куликово хирӗнчи ҫапӑҫу умӗн вырӑссемпе тутарсен ҫарӗсем мӗнле вырнаҫса тӑни.**

ра тăракан отряд тĕлĕнчен иртме пуçласан, Боброк сасартăк вĕсем çине тылран тапăннă. Тутарсем хăраса ӳксе ним йĕркесĕр тарма тытăннă. Чакса пыракан вырăс çарĕсем йĕркене кĕрсе наступленине куçнă. Çапăçу мĕнпе пĕтесси паллă пулнă. Хыçалта пытанса тăнă полк тата килсе çитнĕ тĕп вăйсем хĕснипе тутарсем Хĕрлĕ сăрт патнелле чакнă, унта Мамай хăйĕн паллă мурзисемпе çапăçу мĕнле пынине сăнаса тăнă. Хăйĕн çарĕсем поражени тӳснине курсан, вăл пысăк мар отрядпа тарнă. Вырăс çарĕсем пĕр чарăнмасăр вăтăр çухрăм, Красивая Мечь ятлă юханшыв патне çитиччен, хăваланă. Çапла вĕçленнĕ Куликово хирĕнчи паллă та чаплă çапăçу.

Вырăс çарĕсем çак çапăçура паттăрлăх, тĕлĕнмелле героизм кăтартнипе, çар начальникĕсем — тĕплĕн шухăшласа тунă стратегипе тата тактикăпа, чапа тухнă. Çапăçу ăнăçлăхĕ, чылай енчен, флангсене пĕлсе вăй парса тăнинчен, резервсене лайăх вырнаçтарса тăратса, вĕсене вăхăтра çапăçăва кĕртнинчен килнĕ. Çар ĕçĕпе вăрçăсен историйĕн специалисчĕсем (Голицин С. Н., Масловский Д., Михневич Н. П. тата ыт.) хак панă тăрăх, Куликово хирĕнчи çапăçу вырăссен XIII—XIV-мĕш ĕмĕрсенчи çар искусствин чи лайăх тĕслĕхĕ пулса тăрать. Куликово хирĕнчи çапăçу вырăссем тутарсене уçă хирти çапăçусенче çĕнтерме пултарнине кăтартнă.

Тутарсем хыççăн хăваласа кайма каçа хирĕç кăна чарăннă. Владимир Андреевич, аслă князь ялавĕ патне тăрса, çара пухмашкăн накăр кăшкăртма хушнă чух, кĕркуннехи хĕвел каç енне сулăннă. Куликово хирĕ тăрăх çĕнтерӳ сасси кĕрлесе кайсан, çакă юнлă çапăçуран сăлăнса юлнă воинсем савăнăçлăн, çĕнтерӳллĕн кăшкăрашса пухăнма пуçланă. Çакăнтах, Куликово хирĕнче, шутсăр нумай вилесем хушшинче тăрса, çĕнтерекенсем Владимир Андреевича „паттăр“ тесе ят панă.

Анчах Димитрий Иванович ниçта та курăнман. Нумай шыранă хыççăн, юлашкинчен, ăна касса антарнă йывăç айĕнче, тăнсăр выртнă çĕртен тупнă. Унăн тумтирĕсем

çинче пĕтĕмĕшпех тăшман хĕçĕ касса пĕтерне йĕрсем пулнă. Тутарсемпе çапăçнă чух ăна тăшман çапса ӳкерне пулнă, вăл вара ăнран тухса нумайччен ним хускалмасăр выртнă. Анчах тимĕр тумтирсем ырă пулни ăна сурансенчен хăтарнă. Тăна кĕрсе çитсен вăл çапăçу хирне пăхса çаврăннă.

Ун куçĕсене хуйхăллă картина курăннă: ăçта пăхнă унта, пур çĕрте те вырăссен вилнĕ воинĕсем купи-купипе выртнă, вĕсем хушшинче вăл хăйне çывăх çынсене те курнă. Пирĕн вăхăта çитнĕ сведенисем тăрăх, вĕсене тĕрĕслесе пăхма халĕ май çук ĕнтĕ, Куликово хирĕнчи çапăçура икĕ енчен 200 пин çын таран вилнĕ. Вырăс çарĕсем хăйсен йышĕнчен çуррине çухатнă. Çакă пысăк çапăçу вăл çĕнтерӳллĕ войскасен савăнăçне тĕксĕмлетнĕ. Куликово хирĕнчи çапăçу çинчен вырăс çĕрĕн пур кĕтесĕсенче те хывнă калавсенче вăл çапăçăва вырăс халăхĕн аслă уявĕ выранне хунипе пĕрлех, вилсе пĕтнисем шутсăр нумай пулни çинчен питĕ пысăккăн хурланса калаççĕ. „Вырăс çĕрĕн; — тет летописец, — çав çапăçу хыççăн воеводăсем, тарçăсем тата — тĕрлĕрен воинсем сахалланса юлнă“.

Пур княжествăсемпе хуласене те çĕнтерӳ çинчен савăнăçлă хыпара пĕлтерме хыпарçăсем ярсан, Димитрий Иванович çапăçура вилнисене пытарма пуçланă. Куликово хирĕнчи çапăçу çинчен калакан калав çак пытару çинчен çапла калать: Димитрий Иванович вилнисен шутне хăй шутланă, вĕсенчен уйăрăлнă чух хуйхăрса çапла каланă: „Сире çак вырăнта, Донпа Днепр хушшинче, Куликово хирĕнче, Непрядва юханшыв çийĕнче пуç хывма тиврĕ! Вырăс çĕрĕшĕн хăвăр пуçăрсене çакăнта... хывмалла пулчĕ сирĕн...“

Вилесене вырăс çарĕсем сакăр кун хушши пытарнă, çапах та нумай виле пытармасăр юлнă.

Куликово хирĕнчен 30 — 40 çухрăмра тăнă Литва князĕ Ягайло, Мамай поражени тӳснине пĕлсен, хăвăрт пухăнса Литвана кайнă. Рязань князĕ Олег та унпа пĕрле тарнă.

Димитрий Иванович Мускава таврӑнни пӗтӗм халӑхӑн пысӑк уявӗ пулса тӑнӑ.

Халӑх савӑнӑҫӗ ҫӗнтерӳллӗ ҫарӑн каялла тавӑрӑнмалли ҫулне савӑнӑҫпа хаваслӑх ҫулӗ туса хунӑ. Чансен хаваслӑ янравӗ вӗсене Мускава ҫитиччenех ӑсатнӑ. Мускава ҫитсен Димитрий Иванович ҫавӑнтах Рязань ҫӗрӗсем ҫине ҫар ярасшӑн, вӗсене ултавшӑн тавӑрасшӑн пулнӑ, анчах Рязань боярӗсен делегацийӗ ӑна Олег тарни ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫав делегациех „Мускав князьне пӑхӑнса тӑма" хатӗр тӑни ҫинчен пӗлтернӗ, Олег хӑй те часах Рязане таврӑннӑ. Ӳкӗннӗ пек пулса вӑл Димитрий Ивановичран каҫару ыйтнӑ. Димитрий ӑна Рязань княжествине тавӑрса панӑ та унпа союз тунӑ.

Мамай хӑйӗн ҫарӗн юлашкийӗсемпе Калка юханшыв хӗррисем патне тарнӑ, унта кӗтмен ҫӗртенех ун ҫине хӑйӗн тӑшманӗ Тохтамыш тапӑннӑ. Тутарсен икӗ ҫарӗ хушшинчи ҫапӑҫу Мамая пӗтӗмӗшпех ҫӗмӗрсе тӑкнипе вӗҫленнӗ. Мамай Кафу хулине (хальхи Феодосия) тарнӑ, ӑна унта часах вӗлернӗ.

Ылттӑн Ордара Тохтамыш пуҫпулса тӑнӑ, вӑл Мускава Димитрий Иванович патне тата ытти князьсем патне те хӑй Мамая ҫӗнтерни ҫинчен пӗлтерӳ янӑ. Тохтамышӑн туслӑ посольствине Мускавра пысӑк хаваслӑхпа тата хисеплӗн йышӑннӑ. Посольствӑра пулнисем пурте пуян парнесем илнӗ, анчах Димитрий Иванович та, тата ытти князьсем те, никам та Ылттӑн Ордана кайман. Тепӗр ҫулӗнче, 1381 ҫулта, Тохтамыш Акхозя царевича пуҫлӑх туса Мускава иккӗмӗш посольство янӑ. Ку посольство Чулхулана ҫитсен хӑйсене пурпӗрех Мускавра йышӑнас ҫуккине пӗлсе, текех малалла кайма хӑяйман, Сарая каялла тавӑрӑннӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Тохтамыш Мускава ӗлӗкхин пекех вӑйпа пӑхӑнтарма шут тытнӑ. Димитрий Ивановича хатӗрленме парас мар шутпа вӑл хӑйӗн отрячӗсене Вӑтам Атӑл ҫине янӑ. Хӑйӗн ҫарӗсем Мускав патне пынине ан пӗлччӗр тесе, вӑл ҫул ҫинче тӗл пулакан вырӑс купцисене пурне те тытма хушнӑ.




1370 ç. сентябрĕн 8-мĕшĕнче çарсем Куликово хирĕнче вырнаçса тăни.

Çаратса тăрса вăхăта ирттерес мар тесе, — çул çинче тутар çарĕсем яланах çав ĕçпе хăтланнă, — вăл Атăл урлă каçса Мускав патне хăвăрт кайнă. Рязань çĕрĕсен чиккинче ăна Олег князь тĕл пулнă. Вăл хăй Тохтамыша пăхăнса тăни çинчен пĕлтерсе, тутарсен çарне Серпухов патне ертсе кайнă. Серпухова часах çаратса тăкнă.

Тохтамыш шутлани тĕрĕс пулнă.

Çакă вăл кĕтмен çĕртен пулса тăнă пирки, Димитрий Иванович хăйĕн вăйне сасартăк пухса Тохтамыша хирĕç кирлĕ чухлĕ çар тăратма пултарайман. Мускавран тухсан, Димитрий Иванович çар пухма малтан Переяславля, унтан Костромана кайнă.

Çывхарса килекен тăшмана хирĕç тухма Мускав вăйлăн хатĕрленнĕ. Забороламсем (чул стенасен çӳлĕ юписем) хушшине сăнăсем тивме ан пултарччĕр тесе, хулăм хăмасем çапса лартнă. Заборольниксем, урăхла каласан, забороламсемпе вĕсем хушшине тунă йывăç стенасем хыçĕнче тăракан воинсем, тăшмана хирĕç тăма пĕтĕмпех хатĕр пулнă. Пысăк хурансенче шыв вĕретнĕ. Вĕретнĕ шыв нумай кирлĕ пулнă, мĕншĕн тесен ун чухне тапăнакансене стена çине хăпарнă чух вĕри шывпа сапнă. Çакăнтах забороламсем хыçĕнче тата ытти тĕрлĕрен çар хатĕрĕсене çителĕклĕ таран купаласа хунă: пысăк чулсем, чул етресем, самострелсем. Воинсене хăшне тюфяксемпе (пăшалсемпе) хĕçпăшаллантарнă. Кремль стенисем çине пирвайхи хут тупăсем лартнă. Çар орудисем пахалăх енĕпе те, хисеп енĕпе те Кремле сыхласа тăма çителĕклĕ пулнă. Çынсем тĕлĕшĕнчен те çителĕксĕрлĕх пулман, мĕншĕн тесен тутарсем çывхарни çинчен малтанхи хыпарсем çитсенех, посадсемпе çывăхри ял çыннисем хăйсен пĕтĕм пурлăхĕсемпе Кремль стени хыçĕнче пытанса юлма васканă.

Вăл вăхăтра хупăрласа илнĕ хулана туртса илме час-часах ăна пӳр енчен те вут тĕртсе янă. Хулана вут тĕртес тесен, хула тавра чавса тухнă сарлака та тарăн канавсем урлă каçма кĕперсем хывмалла пулнă. Çакăн

пек приступа примет тенĕ. Москвичсем: Тохтамыш Кремле туртса илме çуккине курсан приметпа усă курма пултарать, тесе шутлани тĕрĕс пулнă. Çапла ан пултăр тесе вĕсем пур посадсене те çунтарса янă. Мускав тавра пĕр пĕрене те, пĕр çатан карта та юлман, çавăн пирки те примет урлă каçма кирлĕ йывăç материалсем тутарсен пулман.

Çаксем пурте вĕсем капланса килекен хăрушлăха ăнăçлăн сирсе яма май панă.

Тутарсем киличчен чылай малтан нумай боярсемпе пуянсем хулана пăрахса кайма шут тытнă. Çавăн пек тăваканнисенчен пĕри—митрополит Киприан пулнă, ун хыççăн вара ăна çывăххисем те тарнă.

Çакăн пек намассăрланса тарни халăха тивĕçлипех тарăхтарнă. Хулара халăх хумханма пуçланнă. Чансем çапнипе пĕтĕм халăх площаде пухăннă та боярсемпе духовенство шухăшне пăхмасăр, Мускава хӳтĕлеме йышăннă. Халăх Мускава Тохтамыш аллине парасшăн мар пулнă. Хуларан тухса каяс текенсене, пĕркассине, кăларса янă. Мускава сыхласси халăх аллине куçнă.

Мускава хупăрласан, ăна приступпа илме май çуккине Тохтамыш часах чухласа илнĕ. Унăн çарĕсем виçĕ кун хушши Кремль стенисем патне пыма хăтланнă, анчах кашнинчех, нумай çын пĕтерсе, каялла чакнă. Хăйĕн ĕçĕсем ăңăçсăр пулнине кура, Тохтамыш тутар çар пуçлăхĕсен яланхи меслечĕпе, урăхла каласан, ултавпа усă курма шут тытнă. Ку тĕлĕшпе вăл ирсĕр предательсемпе усă курнă. Вăл янă делегаци Мускав çыннисене: Тохтамыш Мускава çаратасшăн мар, вăл халăха мар, Димитрий Иванович князе итлеменшĕн айăплама килнĕ тесе пĕлтернĕ. Тохтамыш Мускав çыннисене пурĕ те хăйне пăхăнма çеç хушать, тенĕ. Тутарсем час-часах улталанине пĕлсе, Мускав çыннисем ку сăмахсене ĕненмен. Вара тутар делегачĕсене пулăшма икĕ сутăнчăк — Суздаль князĕсем: Василипе Семен тухнă, вĕсем: тутарсем каланисем пурте тĕрĕс, тесе ĕнентернĕ.

„Пире ĕненĕр, — тенĕ çак предательсем, — эпи сиррĕн христиан князĕсем; эпир çакна калани тĕрĕс тесе шантаратпăр".

Тутарсемпе предательсене пула улталаннă Мускав çыннисем хула хапхисене уçма тата Тохтамыша парнесем пама килĕшнĕ.

Кремль хапхисем уçăлсанах, тутар çарĕсем Мускав çыннисем çине тапăнса, ал айне лекнисене пурне те вĕлерсе тăкнă. Вĕсем хулана кĕрсе кайса çаратма пуçланă. Çакăн хыççăн тутар отрячĕсем пур хуласене те саланнă. Çакăн пек отрядсенчен пĕри Волока патĕнче пысăк çарпа тăракан Владимир Андреевич çине пырса тăраннă, ăна Владимир пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Çак хыпара илтсен Тохтамыш чакма пуçланă.

Димитрий Иванович таврăннă çĕре Мускав пĕтĕмпех çаралса юлнă. Пур урамсем те Мускав çыннисен виллипе тулса ларнă. Летописец çырнисем тăрăх, Мускавра тутарсем 24 пин çын таран вĕлернĕ.

Вăйсăрланнă Димитрий Ивановичăн Ылттăн Ордана пăхăнассине тата пысăк хырçă тӳлессине тепĕр хут йышăнмалла пулнă.

Куликово хирĕнчи çапăçăвăн аслă пĕлтерĕшĕ çакăнпа пĕрре те тĕксĕмленмест. Вырăс халăхне ют халăх пусмăрĕнчен татăклăнах ирĕке кăларма пултарайман пулин те, вăл вăрçă Мускавпа Ылттăн Орда хушшинчи çыхăнăва чылай улăштарнă. Вăл чи малтан тутарсен çарĕсене çĕнтерме çук текен тахçанхи шухăша çĕмĕрсе тăкнă. Куликово хирĕнчи çапăçу Мускавпа унăн князĕн авторитетне пĕтĕм çурçĕр-хĕвелтухăç Руçĕнчи халăх массисем хушшинче ӳстернĕ. Димитрий Ивановича, малтанласа çĕнтереймен пек туйăннă тутарсене çĕнтерекене, вăл вăхăтра çынсем Донской тесе ят панă. Куликово хирĕнчи çапăçупа çыхăннă мĕнпур событисем, нацийĕн хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешмелли центр Мускав пулса тăнине тата вăл пулмаллине кăтартса панă. Çак событисемех, вырăс халăхĕн нациллĕ пĕрлешĕвĕ пуçланни, вырăс çĕрĕсен феодаллă сапаланчăк-



**III Иван патша хан грамотине чӗрсе пăрахать.**

*Шустов худ. картининчен.*

лăхне ерипен пĕтерсе пыни тата государственнăçа çирĕплетни, — вырăс халăхне вăйлă та хăватлă, хăйĕн нациллĕ ирĕклĕхне сыхлама хатĕр тата сыхлама пултаракан вăй туса хунине кăтартнă.

Çак икĕ процесс—нациллĕ пĕрлешӳ тата нациллĕ ирĕклĕхшĕн кĕрешни—пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăнă. Ютçĕршыв пусмăрĕнчен татăклăнах хăтăлас тесен, чи малтан, феодаллă сапаланчăклăхăн юлашкийĕсене пĕтермелле тата вăйлă пĕр центра пăхăнса тăракан государство тумалла пулнă.

Сталин юлташ хăйĕн „Марксизм и национально-колониальный вопрос“ ятлă классикла кĕнекинче кун пирки çапла калать:

„...туркăсем, монголсем тата Хĕвелтухăçĕнчи ытти халăхсем тапăннинчен сыхланас интерессем, вăраха ямасăрах, тапăнса килнине чарса тăма пултаракан, пĕр центра пăхăнса тăракан государство тума хушнă“[1].

Куликово хирĕнчи çапăçу хыççăн çĕр çул иртсен III Иван патша вăхăтĕнче (1462—1505 çç.) Мускав вырăссен мĕнпур феодаллă княжествисене татăклăнах хăйĕн ирĕкне пăхăнтарнă. Ылттăн Ордана хырçă тавраш тӳлеме пăрахнă, вырăс халăхĕн хăватлă государстви пулса тăнă.

Ярославльри тата Ростоври вак княжествăсем хăйсем, хăйсен ирĕкĕпех, Мускав аслă князĕн влаçне йышăннă. Вĕсен владенинче хăйсен ят çĕрĕсене кăна хăварнă. Ытти мĕнпур территорин хуçи Мускав князĕ пулса тăнă.

Феодаллă пысăк княжествăсенчен III Иван патша вăхăтĕнче хăйсене ирĕклисем иккĕ çеç юлнă: Тверь тата Рязань княжествисем. Тата Новгород та хăй ирĕклĕ юлнă, чăннипе вăл çавăн пекех феодаллă государство пулнă, уйрăмлăхĕ çак çеç—кунта власть князь аллинче мар, шултра феодалсем—боярсемпе аслă духовенство аллинче тăнă.

---

[1] *Сталин.* Марксизм] и национально-колониальный вопрос, стр. 73, Партиздат, 1937 г.

Хăй ирĕклĕхне чи малтан Новгород çухатнă. Нумай вăхăт Мускавпа çапăçнă хыççăн,—вăл çапăçусем вăхăтĕнче Новгород боярĕсем Литва пулăшăвĕпе пĕрре кăна мар усă курма хăтланнă,—Новгородăн 1478 çулта Мускава пăхăнса Мускав князĕн влаçне йышăнмалла пулнă. Вечене пĕтернĕ. Вече чанне Мускава янă. Боярла, аристократла Новгород республики пĕтнĕ.

Новгород хыççăн хăйсен ирĕклĕхне Тверьпе Рязань те çухатнă.

Новгородпа çак икĕ юлашки феодаллă княжествăсене Мускава пăхăнтарсан, Мускав князĕн владенине питĕ пысăк территорисем куçнă. Ку таранччен Мускав княжестви тавра удельнăй княжествăсем кăна пулнă пулсан, халĕ унăн ютçĕршыв государствисемпе чикĕленсе тăмалла пулнă. Мускав çĕрĕсем çурçĕрте Шурă тинĕс патне çитнĕ, хĕвелтухăçĕнче Урал хыçне çити тăсăлса кайнă, çурçĕрхĕвеланăç енче таччăнах Швеция çĕрĕсем патне, хĕвеланăçĕнче—Польшăпа Литва тата нимĕç çĕрĕсем чиккисем патне пынă. Çаксем пурте Мускав государствин шалти политикине кăна мар, тулашри политикипе положенине те тĕпренех улăштарнă. Çак вăхăтран пуçласа Мускав князĕсен тăшмансем тапăнассинчен пĕтĕм вырăс çĕрне сыхласа тăмалла, урăхла каласан пĕтĕм нацишĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ задачăна туса пымалла пулнă. Нацине пĕрлештерес политика та ку вăхăтран пачах урăх характерлă пулнă. Ку таранччен Мускав князĕсен пурĕ те кўршĕри феодаллă князьсен çĕрĕсене пĕрлештерес ĕмĕт кăна пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсен тахçан ĕлĕк ютçĕршывсем вăйпа туртса илнĕ вырăс çĕрĕсене каялла тавăрасси çинчен шутламалла пулнă. Ютçĕршывсен аллине кĕрсе ўкнĕ çĕрсенче пурăнакан халăх хăй Мускав княжествине кăмăл тунине пытарман. Вăл вырăс халăхĕн нацине пĕрлештерекен центр пулса тăракан Мускав патне туртăннипе,—Мускав князĕсем умĕнче тăракан çĕнĕ задачăна татса парассине çăмăллатнă.

Литвана пăхăнса тăракан нумай вак князьсем: Вяземски-

сем, Новосильскисем, Одоевскисем, Воротынскисем, Бельскисем III Иван патне службăна куçнă, хăйсен çĕрĕсене ăна панă.

Çакăн пирки 1500 çулта Мускав княжествипе Литва хушшинче тухнă вăрçă виçĕ çултан перемири тунипе пĕтнĕ; вăл перемири тăрăх Литва князĕ Александр мĕнпур Мускав енне куçнă çĕрсене Мускав княжествин тесе йышăннă. Калаçу пынă вăхăтра Александр: эпĕ ку çĕрсене паратăп пулин те, мана вĕсемсĕр юлма пит шел, тенĕ. Литва князĕ çапла каланине хирĕç тавăрса III Иван каланă: „Мана вара Литва аллинче тăракан хам вотчинăсене—вырăс çĕрĕсене: Киева, Смоленска тата ытти хуласене те шел мар-и мĕн?»

III Иван князь пулнă вăхăтра Русь çĕрĕнче тутарсен пусмăрне пĕтĕмпех пĕтернĕ. III Иван хырçă тӳлеме пăрахнăшăн тарăхса Ылттăн Орда ханĕ Ахмат 1480 çулта Мускава хирĕç пысăк çарпа тухнă.

Мускав çарĕсем ăна Угра юханшыв хĕрринче тĕл пулнă. Ахматпа килĕшӳ çинчен калаçу пуçланă вăхăтра III Иван хăйĕн союзникне, Крым ханне Менгли-Гирея, Ылттăн Орда столици çине—Сарай çине тапăнма ĕнентернĕ. Сарай çине тапăнасси çинчен пĕлсен Ахмат хăйĕн владенине тавăрăнма васканă.

Тутарсен пусмăрĕн йывăр та каç пек тĕттĕм вăхăчĕсем иртнĕ.

Тутарсен пусмăрне сирпĕтсе ярсан III Иван самодержец титулне, урăхла каласан урăх никама та пăхăнман, никама та хырçă тӳлемен, государь титулне йышăннă

1453 çулта туркăсем Византие туртса илнĕ. Тутарсен пусмăрне сирпĕтсе янă хыççăн, Мускав князĕ пĕртен-пĕр никама пăхăнман православнăй государь пулса юлнă. Çакăн пек пулнипе унăн влаçне çирĕплетессишĕн тăракансем князь çине Византия императорĕсен преемникĕ вырăнне хурса пăхма пуçланă. III Иван Византийăн юлашки императорĕн тăванне София Фоминична Палеолога качча илни—Мускав Византия наследникĕ пулса тăнă шу-

хăша пушшех çирĕплетнĕ. Çавăн пирки III Иван дворĕнче, Византия дворĕнчи йăласем майлă пуян церемониал тума тытăннă. 1497 çулта III Иван Византия гербне—икĕ пуçлă ăмăрткайăк гербне йышăннă.

Мускав удел княжествинчен чылай ют государствăсемпе—Данипе, Венгрипе, Венеципе, Турципе т. ыт. дипломатиллĕ çыхăну тытса тăракан хăватлă государство пулса тăнă.

Маркс хăйĕн „XVIII-мĕш ĕмĕрти секретлă дипломати" ятлă статьинче нумай вăхăта пынă процесра Мускав государстви пулса тăни çинчен çутатса, çак процесăн юлашки тапхăрне тĕплĕн çырса кăтартнă:

„Иван хăй князьра ларнă вăхăт вĕçĕнче пачах никама пăхăнман государь пулса тăрать, унăн арăмĕ Византийăн юлашки императорĕн тăванĕ пулса тăрать. Хусан ун урисем умĕнче выртать, Ылттăн Ордан юлашкийĕсем вара ун патне туртăнаççĕ. Новгорода тата ытти княжествăсене пăхăнтарнă. Литва аманнă, унăн аслă князĕ Иван аллинче вăйă вылямалли япала кăна. Литвари рыцарьсене çĕнтернĕ.

Тĕлĕнсе кайнă Европа, III Иван патшара ларнă вăхăтăн пуçламĕшĕнче Литвапа тутарсем хушшинче Мускав государстви пурри çинчен кăшт çеç чухлакаланăскер, сасартăк унăн хĕвелтухăç чиккисенче пит те пысăк импери пулса тăнинчен сехĕрленсе ӳкнĕ. Баязет султан хăй те,—унăн умĕнче Европа чĕтресе тăнă,—малтанхи хут москвитянинран мăн кăмăллă сăмах илтнĕ".

## ТУПМАЛЛИ


| | Стр |
|---|---|
| Тутарсемпе малтанхи хут тытăçни . . . . . . . . . . . . . . . . . | 3 |
| Камсем вĕсем тутарсем, ăçтан тата мĕнле килсе тухнă вĕсем вырăс çĕрĕ çине . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 6 |
| Вырăс çĕрĕ тутарсем тапăнса киличченхи вăхăтра . . . . . . . . | 11 |
| Батый тапăнса килни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 20 |
| Тутарсен пусмăрĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 26 |
| Мускав Руçĕ XIV-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурма пайĕнче тата Ылттăн Орда . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 32 |
| Князь Димитрий Иванович Донской тата Ылттăн Орда . . . . . . | 39 |
| Куликово хирĕнчи çапăçу . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 51 |



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР



Редактор перевода **И. П. Павлов-Пинер**

Подписано к печати 10-IX-1941 г.
НТ 5562 Объем 4,5 п. л. Тираж 3000 Экз. Заказ № 398.

Типография № 1 Управления издательств и полиграфии
при СНК ЧАССР, гор. Чебоксары.

5
G.I.M.

Цена 1 руб. 50 коп.

Б. В. ФЕДОРОВ

# КУЛИКОВСКАЯ БИТВА

Госиздат ЧАССР — 1941